Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ОКТЯБĔР 22 ШАМАТКУН 244 (5057) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—0—85. Йалхуçалăх пайĕн — 4—97, советсен пайĕн—0—88, промышлĕннăç пайĕн—7—97, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

Выльăхсене хĕл каçарма лайăх хатĕрленмеле

Аслă тăван çĕршывăн социалисăмлă йалхуçалăхĕ ӳссе вăйланса пынипе пĕрлех, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç те хăвăрттăн малала ӳссе пырать. Халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ ПСК(б) Партин 17-мĕш сиесĕн трибунин çинчен пĕтĕм партине, партинче тăракансемпе партинче тăман большевиксене пурне те выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе хăйсен аллине илме чĕнсе каларĕ. Большевиксем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе социалисăмлă çул çине илсе тухрĕç. Колхозсенчи фермăсем халь выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмели тĕп базă пулса тăчĕç.

Пирĕн республикăра, çак иртнĕ тăватă çул хушшинче, ĕне выльăхсен хисепĕ 23,5 процент, сыснасем 62,4 процент, сурăхсемпе качакасем 23,3 процент хутшăннă. Социалисăмлă çектăр тăрăх илсен, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн ӳсĕмĕ татах та пысăкрах. Колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх фермисем урлă тăватă çул хушшинче колхозниксене пурĕ 5632 пăру, 97.231 пуç сысна çури туйантарнă. Кусемсĕр пуçне государствă çăмăллăхсем парса ĕнесĕр колхозниксене 25.467 пăру туйанма пулăшнă.

Çав ӳсĕмсĕм вĕсем йалта колхоз стройĕ çĕнтернипе, колхозсемпе колхозниксене государствă пулăшнипе çеç пулма пултарнă. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре халăх тăшманĕсем сăтăр туман пулсан, пирĕн çитĕнӳсем татах та пысăкрах пулмала пулнă.

Халиччен тунă çитĕнӳсем çинче пирĕн лăпланс лармала мар. Вăл çитĕнӳсене авыльăх-чĕрлĕхсене хĕл каçарма пур йенчен те лайăх хатĕрленнипе çирĕплетсе хăварас пулать. Выльăхсен йышне малашне ӳстерсе пыма тата вĕсен продуктивлăхне лайăхлатма кирлĕ условисене туса памала.

Республикăри чылай колхозсенче халь социалисăмлă выльăх-чĕрлĕхсене хĕл каçарма большевикла хатĕрленсе пыраççĕ. Улатăр районĕнчи „Путь Ленина“ колхоз ферминче ĕçлекен колхозницăсем Аслă Октябĕр уйавĕ умĕнхи социалисăмлă ăмăртăва хутшăнса хăйсем çине татăклă обйазательствăсем илчĕç. Вĕсем выльăхĕсем вальльи ăшă витесем, кирлĕ таранах апат-çимĕç хатĕрленипе хĕле кĕтсе илеççĕ. Çавăн пекех Вăрнар районĕнчи „Пучах“ тата Хирпуç колхозĕсем те выльăхсене хĕл каçарма лайăх хатĕрленсе пыраççĕ. Ку колхозсенче кăçал çĕнĕрен пысăк витесем туса лартнă т. ыт. те.

Республикăра правительствă çирĕплетсе панă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмели плана пурнăçа кĕртесси начар пырать. Уйрăм районсенче çамрăк выльăхсен шучĕ чакни те палăрать. Пĕтĕмĕшпе илсен выльăхсене хĕл каçарма çителĕксĕр хатĕрленсе пыни курăнать. Строительствă ĕçĕ чăтма çук йулса пырать. Халиччен çĕнĕрен лартмали 307 витерен 85-шне çеç туса пĕтернĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕ 14 витерен пĕрне те туса çитереймен. Вăрмар районĕнче 67 колхозран 19 колхозĕнче çеç витесене йусама тытăннă. Канаш районĕнче, ĕçре малашне те улшăнусем пулмасан, 814 лаша, 773 сысна, 586 пуç сурăх, 449 пуç ĕне вальльи витесем çитменнипе килхушшинех хĕлкаçма йулас хăрушлăх куç умĕнчех. Хăшпĕр районсенче выльăх апачĕсене виçесĕр тыткаласа сайа йани сисĕнет. Куславкка районĕнчи Молотăв йачĕпе тăракан колхозпа Çатракас колхозĕнче клевĕрпе викă утине халех çитерсе йама пуçланă. Паллах, выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсем мĕнрен пулса пынине пур чухне те сăнаса, тĕрĕслесе тăни кирлĕ. Ку ĕçре çăмăлттайла ĕçлемеле мар. Выльăхсене хĕл каçарма лайăх хатĕрленессишĕн чи малтан колхоз председателĕсемпе фермă заведуйушчийĕсем ответлă пулса тăраççĕ.

Партин облăçри XIX-мĕш конференцийĕ партипе совет тата çĕрĕç органĕсене выльăхсене пăхас ĕçĕ лайăхлатма, вĕсене хĕл каçарма хатĕрленес тĕлĕшпе халех кирлĕ пек ĕçсем туса иртерме хушса хăварнине пурнăçа хăварт кĕртмеле.

Кăçал выльăх апачĕсене шута илнĕ чухне иртнĕ çултан йулнă апат-çимĕçсене те хисепе илни кирлĕ. Выльăх апатне расхутланă çĕрте колхозниксем йенчен контроль çирĕп пулмала. Пĕрлештернĕ выльăхсем валльи уйăрса хăварнă апат-çимĕçсене обйазательнă фермă заведуйушчийĕсемпе аслă коньухсен аллине актпа çирĕплетсе памала. Вĕсем çирĕплетсе панă апат-çимĕçсемпе йĕркелĕ усă курассишĕн ответлă. Колхоз правленисен выльăх апачĕсене мĕнле расхутламали çинчен кăтартакан план туса парса, çав плана пурнăçа кĕртсе пынине тĕрĕслесех тăмала. Çавăнпа пĕрлех районсенчи партипе совет тата çĕрĕç органĕсен колхозниксем хăйсен килĕсенчи выльăхĕсене хĕл каçарма кирлĕ апат-çимĕçсене хатĕрленĕ çĕрте пулăшса пымала. Еçкунĕсем тăрăх валеççе памали апат-çимĕççене колхозниксене вăхăтра валеçмесĕр çĕртсе йаракансемпе хайаррăн кĕрешсе пымала.

Колхозсемпе çĕрĕç органĕсен планпа тума пуçăннă çурт-йĕрсене тепĕр çула хăвармасăр, кăçалах туса пĕтермеле. Кунпа пĕрлех, çуртйĕрсене тунă çĕрте тухакан расхутсене, йалхуçалăх, ертелĕн уставĕ çинче кăтартса панă виçерен иртерсе ытлашши тăкаклани те пулмала мар.

Выльăхсене ăнаçлăн, тĕрĕс-тĕкел хĕл каçарасси çынсенчен килет. Ку тĕлĕшпе фермăсемпе выльăх витисенче ĕçлеме колхозниксене нумай вăхăтлăха çирĕплетмеле. Выльăх-чĕрлĕх пăхнă çĕрте ĕçлекен бригадăсенче ССРС Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ фермăсенчи ĕçе йĕркелессипе ĕçшĕн тӳлесси çинчен кăларнă çĕнĕ инструкцисемпе паллаштармала. Кашни работник хăйĕн прависемпе обйазаннăçĕсене тĕплĕн пĕлсе тăтăр, ăна пурнăçа кĕртсе пытăр.

Выльăхсене хĕл каçарма лайăх хатĕрленсе пынă çĕрте ветеринари работникĕсем хисеплĕ те пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Выльăхсене лайăх тата сывă хĕл каçарасси ветеринари работникĕсенчен нумай килет. Ветеринари работникĕсен колхозниксемпе пĕрле выльăхсене хĕл каçарма çуртйĕрсене мĕнле хатĕрленине тĕрĕслесе тухса, йăлтах дезинфекцилемеле. Пур фермăсенче те чирлĕ выльăхсене хупса усрамали уйрăм пӳлĕмсем пулмала.

Троцкисла-бухаринла буржуалă-националиссен фашисла бандисем социалисăмлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе тĕрлĕ майсемпе чăрмантарса пынă. Вĕсем апат-çимĕç базине тума чăрмантарнă. Çуртйĕрсене йусаман. Çĕнĕ строительствă ĕçĕсене çултан çула тăсса пынă. Выльăхсене хĕллехи кунсенче апат памасăр сивĕре тăратса вуншар, çĕршер пуçа чирлеттерсе вĕлерттернĕ. Анчах, сталинла Нарком Иежов йулташ йертсе пынипе совет разведки халăх тăшманĕсене вăхăтра тытса, вĕсене çĕмĕрсе тăкрĕ.

Темиçе çул хушши выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре сăтăр туса пынă халăх тăшманĕсемпе, вĕсен кайашĕсемпе малашне те хайаррăн кĕрешсе пырса тата сăтăрла ĕçсен йулашкисене хăвăрт пĕтерсе çитерме колхозниксен массин сарлакан хутшăнса ĕçлени кирлĕ.

Харькăв облăçĕнчи Хотенски районĕнчи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре ĕçлекен работниксем чĕнсе каланине пур фермăсенче те анлăн сӳтсе-йавса, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре çĕнĕ çĕнтерӳсем тума кирлĕ ĕçсене палăртса, вĕсене пурнăçа кĕртессишĕн пĕтĕм вăйа хурса ĕçлемеле. Аслă Октябĕр уйавĕ умĕнхи социалисăмла ăмăртăва анлăн сарса пырса выльăхсене хĕл каçарма лайăх хатĕрленмеле.

Кĕрхи тырăсене акни тата кĕрхи çĕртме сухине сухалани

1938 çулти октябĕрĕн 15-мĕш тĕлне Сойузĕпе колхозсенче, ССРС Совхозсен Халăх Комиссариатне, Çĕрĕç Халăх Комиссариатне тата Апат-çимĕç промышлĕннăç Халăх Комиссариатне кĕрекен совхозсенче пучахлă тырăсене 86 мĕлйун та 768 пин гектар çинчен вырса пуçтарса плана 99,2 процент тултарнă. Вăл тырăсене, комбайнсемпе вырса пуçтарнипе пĕрле шутласан, 74 мĕлйун та 813 пин гектар çинчине çапса, плана 36 процент тултарнă.

(ТАСС).

Хабаровск гарнизонĕн чаçĕсенчи бойецсем, льотчиксем, техниксем, командирсем, политработниксем Сталин йулташ патне йанă салам

Мускав, Кремль

Сталин йулташа

Епĕр, Хабаровск гарнизонĕн чаçĕсенчи бойецсем, льотчиксем, техниксем, командирсем, политработниксем тата вĕсен çемйисен килйышĕсем, „Родина“ самольотăн паттăр екипажне Валентинă Гризодубăвă, Полинă Осипенко тата Маринă Расковă йулташсене кĕтсе илме митинга пухăннăскерсем, Сире, Сталин йулташ, пурте пĕтĕм чĕререн йуратса тăракан çулпуçне, пирĕн туса тата учителе красноармейĕцла, большевикла хĕрӳлĕ салам йаратпăр!

Хаклă йулташ Сталин! Пайан пирĕн бойецсен, льотчиксен, техниксен, командирсен, политработниксен тата вĕсен çемйисен çав тери пысăк савăнăç. Пирĕн чĕресем уйаври хаваслăхпа, савăнăçпа тулнă. Халиччен пулман хăйсен чаплă вĕçевĕпе пирĕн социалисăмлă тăван çĕршывăн мухтавĕпе чапне тата унăн вăй-хăватне татах ӳстерекен хăйулă льотчицăсене кĕтсе илнипе епĕр питĕ савăнни çинчен сире каласа паратпăр.

Сталин пăхса ӳстернĕ çынсен паттăрлăхĕпе, хăйулăхĕпе, тӳсĕмлĕхĕпе тата вĕсем тăван çĕршыва чĕререн йуратса уншăн тăнипе Совет Сойузĕнчи ĕççыннисем тивĕçлипе тĕлĕнсе савăнаççĕ. Вĕсене Ленин—Сталин партийĕ вĕрентсе ӳстерчĕ. Çавăн пек ывăл-хĕрсемлĕ халăха никам та çĕнтерес çук.

Пирĕн тăван атте, пирĕн учител тата тус, çак телейлĕ те савăнăçлă пурнăçа Есĕр туса патăр. Хаклă йулташ Сталин, Сире çакăн çинчен шантарса сăмах паратпăр: епĕр, хăйулă льотчицăсен сталинла сокăлсен—Валентинă Гризодубăвă, Полинă Осипенко, Маринă Расковă йулташсен паттăрла вĕçевĕпе савăнса хавхаланнă бойецсем, льотчиксем, командирсем, политработниксем, техниксем—çар ĕçĕпе политикăна татах тимлĕнрех тытăнса отличнă вĕренесшĕн кĕрешетпĕр тата вăрçăпа тухассишĕн хыпса çунакан фашиссене çĕмĕрсе тăкма йаланах хатĕр тăратпăр.

Сывă пулччăр совет авиацин хăйулă сокăлĕсем!

Сывă пултăр Ленинăн Сталинăн аслă партийĕ!

Сывă пултăр аслă Сталин!

„Родина“ самольот екипажĕ çул çинче

„Родина“ самольотăн хăйулă екипажне Хабаровскран илсе тухнă пуйăс Мускавала васкать. Çул çинче пĕр çĕр иртернĕ хыççăн, октябĕрĕн 20-мĕшĕнче ирхине пуйăс Завитой станцине çитнĕ. Унта пысăк митинг пулса иртнĕ. Куйбышевкă Восточнăйа станцинчен 50 километртра виçĕ самольот курăннă. Вăл самольотсем станцăна çитичченех пуйăспа пĕрле вĕççе пынă. Станцăна вĕççе çитсен, станцă тавра вĕçе-вĕçе çаврăннă, паттăр льотчицăсене саламлама пынă ĕççыннисем тĕлĕнче айалтанах вĕçнĕ. Станцăра—çынсем пурте хаваслă. Хăйулă льотчицăсем вакун картлашки çине тухса тăнă, вĕсем хăйсене саламлакансем çине ăшшăн пăхса кулнă. Музыкă сасси, геройăсене, Сталин йулташа чысласа „урра“ кăшкăрнă сасă пĕтĕм станцă тăрăх сарăлса нумайччен кĕрлесе тăнă.

Ушумун станцинче льотчицăсене темиçе çĕр çын—чукунçул çинче ĕçлекенсемпе вĕсен çемйисем кĕтсе илнĕ. Вуникĕ минутлăх тĕлпулу пысăк прăçник пулса тăнă.

(ТАСС).

Волгострой районĕнче

Çĕнĕ вырăна куçаççĕ

Волгострой тунă май, Молого-Шекснин районĕнчи икĕ йуханшыв хушшинче (Йарославль облăçĕ) калама çук пысăк, пилĕк пин тăваткăл мĕтр лаптăкĕш кӳлĕ пулса тăрать. „Атăл тинĕсĕ“ „Мускав тинĕсĕнчен“ вунтăватă хут пысăкрах пулать.

Волгостройăн шыв айне пулакан районĕсенче пурăнакан çынсем çĕнĕ вырăнсене куçаççĕ. Атăл тăрăх сулăсем çинче, пысăк çулсем тăрăх автомобилсем çинче çынсем кунсеренех илемлĕ те лайăх тунă çĕнĕ йалсене куçаççĕ. Çĕнĕ çĕре куçакансене государствă пысăк пулăшу парать. Çуртсене куçарнă май пулакан расхутсене государствă тӳлет, çĕнĕ вырăна куçма кашни хуçалăха 7-шер пин тенкĕ таран укçа параççĕ.

Йарославль облăçĕнчи 8 районран 7 пин хуçалăх куçнă та ĕнтĕ. Мологă хулине пĕтĕмĕшпех Рыбинскри Новолесовкă посолкине куçараççĕ. Мологăран 300 пӳрте йахăн куçарса йанă, хальхи вăхăтра коммуналлă хуçалăх çурчĕсене турттарма пуçланă.

(ТАСС).

Казахстанри çамрăк хĕрарăмсен сиесĕ

Октябĕрĕн 20-мĕшĕнче Алма-Атара Казахстанри çамрăк хĕрарăмсен сиесĕ хупăннă. Сиес ĕçĕсене 298 хĕр хутшăнса ĕçленĕ. Вĕсен хушшинче—Карагандари, Риддерти, Коунрадри çамрăк работницăсем, врачсем, артиссем, трактăрискăсем, ĕне сăвакансем, вĕсем—производствăра тата обшчĕствăлă организацисенче калама çук чаплă ĕçлесе пыракан хĕрсем, çавăнпа вĕсене пурте хисеплеççĕ те йуратаççĕ.

Казахстан хĕрĕсем халь хуçалăхпа культурăн пур отрăçлĕсенче те ĕçлеççĕ. Сахăр кăшманĕ хирĕсен стахановки Доскожанăвă йулташ—республикă Верховнăй Совечĕн председател заместителĕ, 8 хĕр комсомол обкомĕсен çекретарĕсем пулса, 21 хĕр комсомол райкомĕсен çекретарĕсем пулса ĕçлеççĕ. 194 хĕр—врачсем, виçĕ пин ытла хĕр—учителсем. Казахстан столицинчи аслă шкулсенче 1.700 хĕр вĕренеççĕ.

Сиес Казахстанри çамрăк хĕрарăмсене чĕнсе çыру çырнă.

Сиесра Казах ССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ Халăх акынĕ орденоносец Джамбул хамăр çĕршыври хĕрсем çинчен çырнă чаплă сăвă вуласа панă.

(ТАСС).

Çамрăк краснофлотецсем

Севастопольре, Хура тинĕс флочĕн вĕренӳ отрйачĕн илемлетнĕ çурчĕ çинче пысăк плакат хумханса тăрать: „Кĕрсемĕр, социалисăмлă тăван çĕршывăн çамрăк патриочĕсем“.

Хура тинĕс флочĕ çĕнĕ пополнени илет—вĕренӳ отрйадне çамрăк краснофлотецсен пирвайхи ушкăнĕсем пырса çитнĕ. Вĕсем шкулсенче нумай вĕреннĕ, çар ĕçне лайăх вĕренсе хатĕрленнĕ çамрăксем. Вĕсенчен нумайĕшĕ комсомолецсем, стахановецсем.

(ТАСС).

Атăл Хусан патнех сывхармала пулать

Куйбышĕв гидроузĕлне тунă май, Тутар республикĕнче инженерла геологилĕ пысăк ĕçсем туса иртернĕ.

Хальхи вăхăтра Хусантан Атăл хĕррине çитме 5 километр шутланать. Куйбышĕв гидроузĕлне тусан Атăл Хусан патнех сывхарать. Казанкă йуханшывĕ калама çук пысăк кӳлĕне—„Хусан тинĕсне“ йухса тухмала пулать. Хусана 25 километр тăршшĕ шыв кăшăлĕ çаврăса илмеле пулать.

(ТАСС).

20 ЛЕТ ВЛКСМ

КИМ

JAŞASIN HARBIJ-DENIZ FŁOTI VA HARBIJ-HAVA FLOTININ SEFI—LENIN-STALIN KOMSOMOLI!

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: ПССЛКС XX çул тултарнă тĕле „Искусствă“ издательстви узбек чĕлхипе кăларнă плакат. Унта: „Сывлăш-Çар флочĕпе Тинĕс-Çар флочĕн шефĕ—комсомол сывă пултăр!“ тесе çырнă. Плаката Н. Денисăвпа Н. Ватылинă художниксем тунă.

В. Иванов репродукцийĕ (Сойузфото).

Германин Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенчи шпионла центрĕ пирки пыракан процес

Нью-Йоркра Германин Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенчи шпионла центрĕ пирки пыракан процесра октябĕрĕн 18—19-мĕшсенче айăпланакан Румриха допрос тунă.

Судра çакна палăртнă: Германирен панă заданисем тăрăх ĕçлесе, шпионла центра кĕнĕ айăпланакансем Румрих, Шльутер, Шутц т. ыт. те Германи контрразведкине тăтăшах шпионла çведĕнисем—Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен оборони мĕнли çинчен, çар хисепĕ çинчен, хĕçпăшаллану çинчен т. ыт. çинчен калакан çведĕнисем парса тăнă.

Кăçалхи йанвар уйăхĕнче Америкăри çар аеродромĕсенчен пĕринче шпионсем çекретлă шифр варланă, çав шифрсемпе Америкă самольочĕсем ытти самольотсемпе, аеродромсемпе çыхăну тытас ĕçре усă курнă пулнă. Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенчи пур пысăкрах авиаци предприйатийĕсенче те шпионла центран хăйĕн агенчĕсем пулнă. Вăл агентсем—нимĕççем—шпионла центра чи çĕнĕ самольотсен черчожĕсен фотоӳкерчĕкĕсем, сывлăшри тата тинĕс çинчи хĕçпăшаллану çинчен кирлĕ пек çведĕнисем парса тăнă. Çавăн пекех тата шпионла центр Америкăри çар карапĕсен конструктăрĕсене шпионла ĕçе йавăçтарма хăтланнă. Германин çар разведки тинĕс-çарĕн пройектсем хатĕрлекен советне, çар промышлĕннăçне тытса пыракан ытти учрежденисене те хĕсĕнсе кĕнĕ.

Шпионла ĕçсем шутĕнче Германи разведки Румриха Америкă паспарчĕсен бланкисем тупса хатĕрлеме хушнă. Çав паспартсемпе вара Германи разведки хăйĕн агенчĕсене, Америкă гражданĕсем пек кăтартса, Совет Сойузне йама шутланă. Судра çакна палăртнă: Румрих хăйне государствă департаменчĕн чиновникĕ пек кăтартса, паспăрт бӳровĕнчен пĕринче 50 паспăрт бланки илме шутланă. Кăçалхи йанвар уйăхĕнче Румриха ареслĕнине пула, вăл çав плана пурнăçа кĕртеймен.

(ТАСС).

Чехословакири лару-тăру

Президент суйлавĕсм пулмали срука малала тăснă

Çĕнĕ президент суйламали срука малала тăсни çинчен Прагăра официаллă пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă. Чехословаки правительстви суйлавсем пуçличчен коммунисла партийе пĕтерсе лартса коммуниссен депутачĕсене парламĕнтри мандатсемсĕр тăратса хăварма, çапла майпа суйлавсенче „пĕрлĕх“ туса хума шутлать пулмала.

Германипе Австрирен политикăла сăлтавсемпе тарса пынă емигрантсем Чехословакире 10 пин çын ытла шутланаççĕ. Англипе Франци правительствисем тата Скандинаври хăшпĕр çĕршывсен правительствисем Чехословакире пурăнакан емигрантсене çав çĕршывсене пыма 500 виза кăна панă. (Визă—ирĕк пани). Çапла туни вăл емигрантсенчен тӳрремех мăшкăласа кулни пулать, тесе çырать демократилĕ пичет. Çав вăхăтрах Прагăри полици çывăхри 6 уйăх хушшинче „хулана емигрантсенчен йăлтах тасатса çитерме“ шутлать.

Закарпат Украинин правительстви, Словаки примерĕ тăрăх, çĕршывра фашисла йĕрке тăвать. Закарпат Украинин территорийĕ çинче „нимĕç партине“ (Германи фашисăмĕн агентури) уççăнах ĕçлеме ирĕк панă. Çавăн пекех тата Германире тухакан фашисла кĕнекесемпе хаçатсем сутма та ирĕк панă.

(ТАСС).

Фашиссем Судет облăçĕнче киревсĕр ĕçсем тăваççĕ

Германи çарĕсем кĕрсе йышăннă Судет облăçĕнчи районсенчен çакăн пек хыпарсем килеççĕ: унта економикăлă лару-тăру питĕ начарланса кайнă, демократилĕ халăха хĕсĕрлеççĕ, Гестапо тата Генлейн штурмовикĕсем киревсĕр ĕçсем тăваççĕ.

Пĕтĕм облăçĕпех апат-çимĕç таврашĕ ытла та çителĕксĕрри палăрать. Фашисла влаçсем налогсене кĕске вăхăтрах тӳлесе татма хушакан распорйажени кăларнă. Судет облăçĕнчех йулнă чехсен пӳрчĕсенче пуринче те ухтарусем тăваççĕ. Концентрацилĕ лагĕрсем çын шăнăçайми тулса ларнă. Судет облăçĕн территорийĕ çинче фашиссем çĕнĕрен икĕ концентрацилĕ лагĕр тăваççĕ.

(ТАСС).

Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (большевиксен) Партин
ИСТОРИЙĔ

ПСК(б)П Тĕпкомĕн Комиççийĕ редакцилене. **КĔСКЕ КУРС.** **ПСК(б)П Тĕпкомĕ ырланă. 1938 ç.**

IV-мĕш сыпăкăн малалли

2. Диалектикăлă тата историлĕ материалисăм çинчен.

Диалектикăлă материалисăм вăл марксисла-ленинла партин мировоззренийĕ пулса тăрать. Марксисла-ленинла партин мировоззрение диалектикăлă материалисăм тесе акă мĕншĕн калаççĕ: вăл природа йавленийĕсене çине диалектикăла пăхать, унăн природа йавленийĕсене вĕренес меточе, унăн çав йавленисене тĕнчесе пĕлес меточе **диалектикăлă** метод пулать, вăл природа йавленийĕсене ăнлантарса пани, вăл природа йавленийĕсене ăнланни, унăн теорийĕ—**материалисăмлă** теори пулать.

Историлĕ материалисăм вăл—диалектикăлă материалисăмăн положенийĕсене обшĕствă пурнăçне тĕпченисе ăнланас çĕре сарни, диалектикалă материалисăмăн положенийĕсемпе обшĕствă пурнăçĕн йавленисене ăнланас çĕрте, обшĕствăна вĕренес çĕрте, обшĕствă историне вĕренес çĕрте усă курни пулса тăрать.

Хайсен диалектикăлă методне палăртса панă чухне Маркспа Енгĕлс йалана Гегĕл çине, диалектикăн тĕп палисене формулировкалана пăнă философ çине кăтартса параççĕ. Анчах та, ку Маркспа Енгĕлс диалектики Гегелĕн диалектикине пĕрешкеллине пĕлтермест. Чăннипе Маркспа Енгĕлс Гегĕл диалектикинчен унăн идеалисăмла хуппине шĕкĕлчесе пăрахса, „рациональнăй тĕшшине“ çеç илнĕ, ăна кучухнехи наукă сăн-сăпатне парас шутпа малала аталантарнă.

„Манăн диалектикăлă метод, тет Маркс, хăйĕн никĕсĕпе Гегĕл методĕнчен расна кăна мар, тÿрех унăн хире-хирĕçлĕхĕ пулса тăрать. Гегĕлшăн шухăш процесĕ—кăна вăл идейă йатне парса хайне уйрăм субйект та туса хурать—чăн пурнине (действительное) пуçарса тăвакана (демиург—творец) пулса тăрать. Гегĕлшăн чăн-пурри вăл шухăш процесĕн куçа курăнакан тулашĕ çеç пулса тăрать. Маншăн, йалтах урăхла, идейă вăл—çын пуçĕнче улăштарса урăхлатнă матери пулса тăрать, урăх нимĕн та мар“ (**К. Маркс**, Послесловие ко второму немецкому изданию 1-го тома „Капитала“).

Хайсен материалисăмне палăртса панă чухне Маркспа Енгĕлс йаланах Фейербах çине, материалисăма хайĕн прависене таварса панă философ çине кăтартса параççĕ. Анчах та ку Маркспа Енгĕлс материалисăмĕ Фейербах материалисăмĕпе пĕрешкеллине пĕлтермест. Чăннипе Маркспа Енгĕлс Фейербах материалисăмĕнчен, ăна сырса илнĕ идеалисăмла тата тĕне-етикăла шухăшсене айăккала сирсе пăрахса, унăн „тĕп тĕшшине“ илнĕ, ăна малала аталантарса материалисăмăн наукăлă-философилĕ теорийĕ туса хунă. Паллă, Фейербах, тĕпрен илсен материалис пулнă пулин те, материалисăм тенĕ йата хирĕç пынă. Фейербах „никĕс йĕнчен материалисăмлă пулнă пулин те, идеалисăмлă кикĕ тăласенчен хăтăлса çитмен-ха“. „Фейербахăн чăн-чăн идеалисăмĕ, епĕр унăн етикипе тĕн философийĕ патне çитсессĕнех, палăрса тухать“, тесе Енгĕлс пĕрре кăна мар калана (**К. Маркс и Ф. Енгельс**. т. XIV, стр. 652—654).

Диалектика грексен „диалего“ текен сăмахĕнчен пуçланса кайнă, вăл—калаçас тенине, тавлашас тенине пĕлтерет. Елĕк-авал диалектика тесе, противникăн калаçăвĕнче хирĕçÿсем тупса, çав хирĕçÿсене пĕтерсе пырса чăнлăха тупас искусствăна каланă. Елĕк-авал хăшпĕр философсем çапла шутланă: шухăшсенче хирĕçÿсем тупни тата хире-хирĕçле шухăшсем тавлашни чăнлăха тупас çĕре чи лайăх меслет пулать, тенĕ. Çапла диалектикăлă майпа шухăшланни, кайрантарахпа природа йавленийĕсем çине сарса йанăскер, природа йавленийĕсене тĕнчесе пĕлес çĕри диалектикăлă метод пулса тăнă. Ку метод природа йавленийĕсене ĕмĕрех куçса тата улшăнса пыракан йавленисем тесе пăхать, природа аталанăвне — природари хирĕçÿсен аталанăвĕн резултачĕ, природари хире-хирĕçле вăйсем çыхăнса пырса пĕр-пĕрне улшăнтарнин резултачĕ тесе пăхать.

Диалектикăн хайĕн никĕсĕпе метафизикăна тÿрех хир-хирĕçле.

1) Марксисла **диалектикăлă метод** çакăн пек тĕп палăсемпе палăрса тăрать:

а) Метафизикăна хире-хирĕçле пулса, диалектикă природа çине пĕр-пĕрине çыхăнман, пĕр-пĕринчен уйрăм тăракан тата пĕр-пĕрне пачкаса тăман йавлансен, йавленисен ăнсăртран пулнă капланăвĕ çине пăхнă пек мар пăхать,—йалтах урăхла, пĕр-пĕрипе çыхăнса тăракан, пĕрлĕхле пĕрпĕтĕм çине пăхнă пек пăхать, кунта йапаласем, йавленисем пĕр-пĕрипе органически çыхăнса тăраççĕ, пĕр-пĕрне пăхăнса тăраççĕ тата пĕринчен пĕри килсе тăраççĕ.

Çавăнпа та диалектикăлă метод çакăн пек шутлать: природари пĕр йавленине те, ăна хайне уйрăм илсе, таврари йавленисемпе çыхăнтармасăр илсе пăхсан, ăна ăнланса илме май çук, мĕншĕн тесен природăн кирек хăш облăçĕнчи кирек хăш йавленине те, ăна таврари условисемпе çыхăнтармасăр, вĕсенчен уйăрса илсе пăхсан, ниме пĕлтермен шухăш туса йама пулать, тата, йалтах урăхла, кирек мĕнле йавленине те, ăна таврари йавленисенчен ним уйăрмасăр илсе пăхсан, вăл йавлени хăйне таврари йавленисенчен килсе тăнине шута илсе пăхсан, ăна ăнланма та, сăлтавласа пама та пулать.

б) Метафизикăна хире-хирĕçле пулса, диалектикă природа çине тÿлекĕн тăраканни тата пĕртте куçманни, чăрăнса тăни тата улшăнманни çине пăхнă пек пăхмасть, йалтах урăхла, татти-сыпписĕр куçса тата улшăнса пыраканни, татти-сыпписĕр çĕнелсе тата аталанса пыраканни çине пăхнă пек пăхать, кунта йалтах мĕн те пулин çĕнĕрен пуçланса тухать те аталанать, мĕн те пулин ишĕлсе пырать те хайĕн ĕмĕрне ирттерет.

Çавăнпа та диалектикăла метод йавленисене, вĕсем пĕр-пĕрипе çыхăнса тата пĕр-пĕринчен килсе тăни йĕнчен кăна мар, тата вĕсем куçса, вĕсем улшăнса, вĕсем аталанса пыни йĕнчен те, вĕсем çĕнĕрен пуçланса тухни тата пĕтсе пыни йĕнчен те пăхма хушать.

Диалектикăлă методшăн, пуринчен малтан, ку самантра тĕреклĕн курăнаканни, анчах ĕнтĕ пĕтсе пыма пуçлани мар кирли пулса тăрать, çĕнĕрен пуçланса тухаканни тата аталанса пыраканни,—ку самантра вăл çирĕппĕнех курăнмасть пулин те,—кирли пулса тăрать, мĕншĕн тесен диалектикăлă методшăн çĕнĕрен пуçланса тухаканни тата аталанса пыраканни кăна çĕнме çук вăйли пулса тăрать.

„Пĕтĕм природа, тет Енгĕлс, чи пĕчĕк пайĕсенчен пуçланса чи пысăк телосĕм таранах, чи пĕчĕк пĕрчĕрен пуçласа хĕвел таранах, протистран (чи пуçламăш чĕрĕ клетка.—**Ред.**) пуçласа çын таранах, ĕмĕрех çĕнĕрен пуçланса тухать те пĕтсе пырать, татти-сыпписĕр йухса тăрать, ним чарăнмасăр куçса тата улшăнса пырать“ (**К. Маркс и Ф. Енгельс**, т. XIV, стр. 484).

Çавăнпа та, тет Енгĕлс, диалектика „йапаласене тата вĕсем ăспуçра палăрса тăнине пуринчен ытла вĕсем пĕр-пĕрипе çыхăнса тăнипех, вĕсем пĕр-пĕрипе пĕтĕçсе тăнипех, вĕсем куçса пынипех, вĕсем çĕнĕрен пуçланса тухнипех тата пĕтсе пынипех илсе пăхать“ (çавăнтах, стр. 23).

в) Метафизикăна хире-хирĕçле пулса, диалектикă аталану процесне ÿсĕмĕн ахаль процесĕ пек мар,—кунта количествăлă улшăнусем качествăлла улшăнусем патне илсе пымаççĕ,—йалтах урăхла, пысăках мар тата пытанчăк количествăлă улшăнусенчен уççăн курăнакан улшăнусем патне, тĕпрен пулса пыракан улшăнусем патне, качествăлă улшăнусем патне куçакан аталану пек илсе пăхать,—кунта качествăлла улшăнусем йерипен мар, хăвăрт, сасартăк, пĕр тĕрлĕ состойанирен тепĕр тĕрлĕ состойанипатне сикĕм йеврĕлĕн куçса пыраççĕ, ăнсăртран мар, саккунлă йĕрĕлĕхпе пулса пыраççĕ, асăрхамалла мар тата йерипен пулнă количествăлă улшăнусем пухăннипе пулса пыраççĕ.

Çавăнпа та диалектикăлă метод çакăн пек шутлать: аталану процесне çавраşка тăрăх пулса пыракан йухăм пек мар, пулса иртнисене тепĕр хут проста туса иртерни пек мар ăнланмала, малала пуса пыракан йухăм пек, малала çĕклене пыракан йĕр тăрăх пулакан йухăм пек ăнланмала, кивĕ качествăлла состойанирен çĕнĕ качествăлла состойание куçни пек, простой йапаларан сложнăй йапала патне, айалта тăраканнинчен çÿлте тăраканни патне куçни пек ăнланмала.

„Природă, тет Енгĕлс, диалектикăн сăнав чулĕ пулса тăрать, çакăн сăнав валли пит пуйан пахи та пурне та тăта куллен кун пумайланса пыракан материал панăскер, çакăн пирне акă мĕн кăтартса панă: природăра, йулашкинчен, пурте диалектикăла, метафизикăла мар пулса пырать, природа ĕмĕрех пĕр пек çавраşкара мар, пĕрмайах тепĕр хут çĕнĕрен пулса тăракан çавраşкара мар малала куçса пырать, вăл чăн-чăн историне пурнăçса иртерет. Кунта, чи малтан, Дарвин çине кăтартса парас пулать, вăл, кучухнехи пĕтĕм органически тĕнче, ÿсентăрансемпе чĕр-чунсем, çапла вара, етем те çавăн пекех мĕлйуншар çул пулса пынă аталану процесĕн продукчĕ пулнине кăтартса парса, природăна метафизикăлла ăнланнине питех те вăйлăн çапнă“ (çавăнтах, стр. 23).

Енгĕлс, диалектикăлă аталану çинчен, ăна количествăлă улшăнусем качествăлла улшăнусем патне куçни вырăнне хурса палăртнă хыççăн, çакăн пек калать:

„Физикăра... кашни улшăну количествăн качествăна куçни пулса тăрать, телона тивĕçлĕ количествăлла улшăнăвăн йе ăна мĕнле те пулин формăлă йухăмăн количествине пăнин резултачĕ пулса тăрать. Çапла, сăмахран, шыв температурин малтанлăха унăн тумлăмлă-шĕвĕ состойанийĕ тĕлĕшне ниме пĕлтерĕш те çук; анчах шĕвĕ шывăн температурине хăпартсан йе антарсан, çакăн пек самант килсе тухать: шывăн пĕтĕçсе тăрас состойанийĕ улшăнать, шыв вăра температурăна хăпартнă чухне—пăс пулать, антарнă чухне—пăр пулать... Çапла, платинăран тунă пралук çута пама пуçлатăр тесен, ток вăйĕн паллă минимумĕ кирлĕ; çапла, кашни металăн хăйне ирĕлме кирлĕ ăшă виçи пур; çапла, кашни шĕвĕ йапалан, температурăн ку йе çав давленийĕ вăхăтĕнче,—епĕр хамăрăн хăтĕрсемпе çав тивĕçлĕ температурăна тума пултаратпăр пулсан,—хăйне шăнма тата вĕреме кирлĕ паллă точкă пур; çапла, пулашкинчен, кашни газăн хăйĕн критически точкă пур, çав точкăра, тивĕçлĕ давленипе пусарсан тата сивĕтсен, газран шĕвĕ йапала тума пулать... Физикă константисем (пĕр состойанирен тепĕр состойание куçмалли точкăсем.—**Ред.**) тенĕскерсем—пумăй чухне тĕп точкăсен йăчĕсем пулса тăраççĕ, кунта йухăм количества тĕлĕшпе (улшăнни) хутшăнни йе чакни пĕр-пĕр палăлă телон состойанине качествăлла улшăну туса иртерет,—кунта, çапла вара, количества качествăна куçать“ (çавăнтах, стр. 527—528).

Малала химри патне куçса, Енгĕлс калать:

„Химине телосан количествăлла составĕ улшăннин влийанийĕпе пулса иртекен качествăлла улшăнусем çинчен вĕрентекен наукă тесе калама пулать. Çакна Гегĕл хай те пĕлнĕ ĕнтĕ... Илемĕр кислорода: кунта молекулăна йаланах пек икĕ атом мар, виçĕ атом пĕрлешсе хутшăнать пулсан, пирĕн умра вара озон пулать, çак тело хайĕн шăршипе тата действийĕпе ахаль кислородран палланах уйрăлса тăрать. А мĕн каламалла-ха кислород азотпа йе кÿкĕртпе пĕрлешсе хутшăнакан тĕрлĕ пропорцисем çинчен, вĕсенчен кашни пропорци ытти мĕнпур телосенчен качества тĕлĕшпе уйрăлса тăракан тело пани çинчен!“ (çавăнтах, стр. 528).

Йулашкинчен, Гегĕле тĕмĕн пек йатлакан тата çавăнтах Гегĕлĕн паллă положенине: сисĕмсĕр тĕнче патшалăхĕнчен сисĕмлĕх патшалăхне, органический мар тĕнче патшалăхĕнчен органический пурнăç патшалăхне куçни вăл—çĕнĕ состойание сикĕм пулса пулать текен положенине шăппăн илсе йышăнакан Дÿринга критиклесе, Енгĕлс калать:

„Çакă вĕт мерă хутшăнăвĕсен Гегĕл кăтартнă тĕп йĕрĕ пулать, унта чиста количествăлă пысăкланни йе сахалланни паллă тĕп пунктсенче **качествăлла сикĕм** тутарттарать, çапла, сăмахран, шыва ăшăтнă йе сивĕтнĕ чухне шыв вĕрессин йе шăнассин точкисем—виçелĕ давленипе—çĕнĕ агрегатла состойание куçмали сикĕм пулакан тĕп вырăнсем пулса тăраççĕ, çапла вара, çакăнта количества качествăна куçать“ (çавăнтах, стр 45—46.).

г) Метафизикăна хире-хирĕçле пулса, диалектикă çакăн пек пĕлтерет: природа предмечĕсене, природа йавленийĕсене шалти хирĕçÿсем пур, мĕншĕн тесен вĕсен пурин те хăйсен отрицательнăй йенĕпе положительнăй йенĕ пур, иртсе пĕтекеннипе аталанаканни пур, çак хире-хирĕçлĕхсен кĕрешĕвĕ, кивĕнни çĕнни хушшинчи кĕрешÿ, пĕтсе пыраканнипе çуралса пыраканни хушшинчи кĕрешÿ, иртсе пĕтекеннипе аталанаканни хушшинчи кĕрешÿ вăл аталану процесĕн шалти содержанийĕ, количествăлă улшăнусем качествăлла улшăнусене куçса пынин шалти содержанийĕ пулса тăрать.

Çавăнпа та диалектикăлă метод çакăн пек шутлать: айалта тăраканнисем çÿлте тăраканнисем патне аталанса пынин процесĕ йавленисене гармонилле сарса пырас йĕркепе мар, предметсене, йавленисене тивĕç хирĕçÿсене уçса пырас йĕркепе, çав хирĕçÿсен никĕсĕ çинче пулакан хире-хирĕçле турттамсен „кĕрешĕвĕ“ йĕркипе пулса пырать.

„Диалектика, хăйĕн пĕлтерĕвĕпе каласан, тет Ленин, кирек мĕн пур **предметсен сущнăçĕнче хăйĕнче** хирĕçÿсене вĕрене тĕпчени пулать“ (**Ленин**, „Философские тетради“, стр. 263).

Малала тата:

„Аталану вăл—хире-хирĕçлĕхсен „кĕрешĕвĕ“ пулса тăрать“ (**Ленин**, т. XIII. стр. 301).

Çакăн пек, кĕскен каласан, марксисла диалектикăлă методăн тĕп паллисем.

Обшĕствă пурнăçне вĕренес çĕрте, обшĕствă историне вĕренес çĕрте диалектикăлă метод положенийĕсене сарни мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăнине, обшĕствă историне вĕренес çĕрте, пролетариат партийĕн практикăлă ĕçĕнче çав положенийĕсем усă курни мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăнине ăнланса илме йăвăр мар.

Тĕнчере хăйне уйрăм пулса пыракан йавленисем çук пулсан, пур йавленисем те пĕр-пĕрипе çыхăнса тăрса пĕр-пĕринчен килсе тăраççĕ пулсан, паллах, кашни обшĕствăлла стройа тата историри кашни обшĕствăлла йухăма,—историксем час-часах тунă пек,—„ĕмĕре пыракан тĕрĕслĕх“ йе урăх пĕр-пĕр малтанах шутласа хунă идейă йĕнчен пырса мар хакламала, çак стройа, çак обшĕствăлла йухăма çитĕнтерсе кăларнă тата вĕсемпе çыхăнса тăракан условисем йĕнчен пырса хакламала.

Рабовладельчески строй кучухнехи условисемшĕн ниме йурăхсăр шухăш, чăнлăха хирĕç пыракан айванлăх пулса тăрать. Рабовладельчески строй первобытнăй-общиннăла строй пĕтсе пынă условисенче пĕтĕмпех ăнланмала та йĕркелĕ йавлени пулнă, мĕншĕн тесен рабовладельчески строй, первобытнăй-общиннăла стройпа танлаштарсан, малала утăм туни пулнă.

Çапла ĕнтĕ, обшĕствăн хаçхи вăхăтра пысăк вăй пулса тăракан, анчах урăх аталанман сийĕсем йĕнлеле мар, аталанса пыракан, вĕсем хаçхи вăхăтра пысăк вăй пулса тăмаççĕ пулин те, пулаçлăхла сийĕсем йĕнелле çул тытса пынă.

Тĕрĕ пулнă... (see next column)

Ку маншăн.

Патша йĕркипе буржуалă обшĕствă пулнă условисенче, калăпăр, 1905 çултра Российăра буржуалă-демократилĕ республика тума ыйтни вăл пĕтĕмпех ăнланмала, тĕрĕс тата революцилĕ требовани пулнă, мĕншĕн тесен буржуалă республика унчухне малала утăм туни пулнă. Анчах СССР Сойузĕнчи пирĕн хаçхи условисенче буржуалă-демократилĕ республика тума ыйтни ниме йурăхсăр шухăшлă, контрреволюцилĕ требовани пулнă, мĕншĕн тесен буржуалă республика, Совет республикипе танлаштарсан, каялла утăм туни пулса тăрать.

Пурте условисенчен, вырăнтан тата вăхăтран килет.

Паллах, обшĕствăлла йавленисем патне çакнашкал **историлĕ** пырса пăхнисĕр истори çинчен вĕрентекен наукă пурăнма тата аталанма пултараймасть, мĕншĕн тесен çапла пырса пăхни çеç историлĕ наукăна вăл ăнсăртлăхсен йĕркесĕрлĕхĕ тата киревсĕр йăнăшсен купи пулса тăрасран хăтарать.

Малала. Тĕнче татти-сыппĕсĕр куçса аталанса пырать пулсан, кивви пĕтсе пыни тата çĕнни çитĕнсе пыни аталанăвăн саккунĕ пулса тăрать пулсан, паллах, „аркамни“ обшĕствăлла йĕркесем, уйрăм харпăрлăхпа еxплуатаци „ĕмĕрех пыракан принципĕсем“, хресченсем—помешчиксене, рабочисем—капиталиссене пăхăнса пурăнмалла тăвакан „ĕмĕрех пыракан идейăсем“ урăх çук.

Çапла ĕнтĕ, капиталисăмлă стройа, вăл хăй вăхăтĕнче феодалисăмлă стройа улăштарнă пекех, социалисăмлă стройпа улăштарма пулать.

Çапла ĕнтĕ, обшĕствăн хаçхи вăхăтра пысăк вăй пулса тăракан, анчах урăх аталанман сийĕсем йĕнелле мар, аталанса пыракан, вĕсем хаçхи вăхăтра пысăк вăй пулса тăмаççĕ пулин те, пуласлăхлă сийĕсем йĕнелле çул тытса пынă.

Иртнĕ ĕмĕрĕн сакăрвуннăмĕш çулĕсенче, марксисемпе народниксене хирĕç кĕрешнĕ саманара, Российăра пролетариат, халăхăн нумайăшне тăракан пайĕ пулса тăракан йединоличнăй хресченсемпе танлаштарсан, пысăк мар сахалтарахăшĕ пулса тăнă. Анчах пролетариат, клас тĕлĕшпе, аталанса пынă, çав вăхăтра пурнăçа хресченсем, клас тĕлĕшпе, саланса пынă. Çавăнпа та ĕнтĕ пролетариат, клас тĕлĕшпе, аталаннă пирки марксиссем пролетариат йĕнелле çул тытса пынă. Вĕсем вара йăнăшман, мĕншĕн тесен, паллă ĕнтĕ, кайран пролетариат пысăкăх мар вăйран историлĕ тата политикăлă пысăк та хăватлă вăй пулса тăнă.

Çапла ĕнтĕ, политикăра йăнăшас мар тесен, кайала мар, малала пăхас пулать.

Малала. Вăрахăн пулса пыракан количествăлă улшăнусем хăвăрт та сасартăк пулакан качествăлла улшăнусене куçни аталанăвăн саккунĕ пулса тăрать пулсан, паллах, пусмăрти классем тăвакан революцилĕ переворотсем пĕтĕмпех йĕркелĕ тата пурпĕрех пулмала йавлени пулса тăраççĕ.

Çапла ĕнтĕ, капиталисăмран социалисăма куçасси тата рабочи класа капиталисăм пусмăрĕнчен ирĕке кăларасси вăрахăн улшăнса пыни урлă мар, реформăсем урлă мар, капиталисăмлă стройа качествăлла улшăнтарни урлă, революци урлă кăна пурнăçа кĕме пултарать.

Çапла ĕнтĕ, политикăра йăнăшас мар тесен, реформис мар, революционер пулас пулать.

Малала. Аталану шалти хирĕçÿсене уçса пырас йĕрке, хире-хирĕçле вăйсем çав хирĕçÿсен никĕсĕ çинче, çав хирĕçÿсене çĕнтерсе пĕтерес тесе, пĕр-пĕрипе пырса çапăнас йĕркепе пулса пырать пулсан, паллах, пролетариатăн класлă кĕрешĕвĕ пĕтĕмпех йĕркелĕ тата пурпĕрех пулмала йавлени пулса тăрать.

Çапла ĕнтĕ, капиталисăмлă йĕркесен хирĕçÿсене пытарса пымала мар, вĕсене уçса палăртса пымала, клас кĕрешÿне сÿнтермелле мар, ăна вĕçне çитерсе пымала.

Çапла ĕнтĕ, политикăра йăнăшас мар тесен, пролетариатпа буржуазин интересĕсен гармонийĕ çинчен калакан реформисла политикăна мар, капиталисăм социалисăма „çитĕнсе кĕрет“ текен соглашательле политикăна мар, пролетариатăн класлă политикине тăшмансемпе ним килĕшмесĕр пурнăça кĕртсе пырас пулать.

Çакăн пек тăрать ĕç марксисла диалектикăлă медот тĕлĕшпе, ăна обшĕствă пурнăçĕ, обшĕствă историйĕпе усă курма илсен.

Марксисла философилĕ материалисăма илсен, вăл хăйĕн никĕсĕнче философилĕ идеалисăма тÿрех хире-хирĕçле.

(ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕн малалли „Чăваш Коммунĕ“ хаçатăн çитес номĕрĕсенче пичетленет).

Ленинла-сталинла комсомол XX çул тултарна тĕле

Кубежнăй Восток участкинчи (горизонт „350“) стаханăвĕç-забойщик, кăмрăк маçтарĕ комсомолĕц И. И. Панашатенко ПСCЛКС XX çул тултарнă тĕле кашни кун виçĕ нормă тултарса пыма пулнă. И. И. Панашатенко хайĕн сăмахне пурнăçа кĕртсе, вăл август уйăхĕн планне 8 кун хушшинче тултарнă.

ÇУКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: И. И. Панашатенко.

Б. Козÿк тата Б. Вильямс фото ÿкерчĕкĕ (Сойузфото).

Райкомол лăпланса ларнă

Канаш—Шупашкар чукунçул строительствинче Вармар районĕнчи чылай комсомолĕцсем вирлĕн ĕçлесе пыраççĕ. Халĕ Кĕтеснер йалĕнчен 5 комсомолĕц строительствăна тухса кайрĕç. Вĕсене вулав çурчĕн пуçлăхĕ В. Петров йулташ йертсе пырать. Çавăн пекех Кивĕ Мăнтăр йалĕнчен—6 комсомолĕц (комсорг Герасимăв та вĕсемпех), Шамалахран—2, Кавалтан—2, Кив Шулхантан—2 комсомолĕц т. ыт. колхозсенчен те чукунçул строительствине ĕçлесе килчĕç. Анчах хăшпĕр комсомол организацисем комсомолĕцсен йышĕ пысăк пулин те строительствăна пĕр çын та йаман. Кун пеккисен шутне Арапуç Чупай, Аслă Чак, Пысăк Иенкасси, Кĕлкеш йалĕсенчи пуçламăш организацисене кĕртмеле. Шăхаль йалĕнчен пынă 2 комсомолĕц пĕр кун ĕçлесенех килле таврăннă. ПСCЛКС райкомĕ (секретарĕ В. Петров) лăпланса ларнă. Района 50 комсомолĕц йамала пулин те, çурри кăна ĕçлесе.

В. Алендейĕв.

Уйава хатĕрленеççĕ

Ентимĕркассинчи (Ишлей р.) пуçламăш шкулта вĕренекенсем ленинла-сталинла комсомол уйавне ирттерме хатĕрленеççĕ. „Отличнă“ тата „хорошо“ палăсем илессишĕн кашни вĕренекен тепĕр вĕренекенпе ăмăртать.

Йубилей кунĕ каçхине шкулта вечĕр пулать. Вăл вечĕрта йурлама ачасем виçĕ çĕнĕ йурă вĕренеççĕ, кашни ача пĕрер савă тухса калама вĕренет. Уйав кунĕ тĕлне йатарласа „Отличник“ çтена хаçачĕ тухать.

Г. Серебрйаков.

— О —

Обйазательствăсем илчĕç

УЛАТĂР. Транспарт комбинатĕнче вĕренекенсем Октябрь уйавĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса кашнийĕх аван паллăран кайа мар вĕренсе пыма обйазательствăсем илчĕç.

Ку обйазательствăсене мĕнле пурнăçа кĕртнине йатарласа тунă ăмăрту хăми çине палла туса пыраççĕ. Кунсăр пуçне тата кашни вĕренекенех аслă уйав тĕлне пĕрер оборона значокнĕ илме пулчĕç. Кружокна активлăн çÿресе пайанхи куна 30 ача ПВХО, 20 ача ЮВС значокĕн нормисене пачĕç.

Ç. Федотăв.

— О —

Куçса çÿрекен хĕрлĕ йалав панă

Виççĕмĕш кварталти финанс планне Сур-Майдан йалсовечĕ (Кувакинă р.) срукчен, çентябрĕн 15-мĕш тĕлне тултарчĕ.

Çакна шута илсе Кувакина райĕçтăвкомĕн пленумĕ Сур-Майдан йалсоветне райĕçтăвкомăн куçса çÿрекен хĕрлĕ йалавне панă. Йалсовет председательне, налог агентне тата, колхоз председательне укçа парса премиленĕ.

ПАРТИ ПУРНӐҪӖ

Парткабинет ӗҫне урӑхлатса ҫӗнетмеле

ПСК(б)П историйӗн Кӗске курсне кӑларни, ӑна вӗренессине йӗркелесе пырасси районри парткабинетсен ӗҫне пысӑклатаԏ, ответлӑхне хӑпартаԏ. Ҫавна шута илсе Шӑхасан райкомӗн парткабинечӗ (заведуйушчийӗ Михайлӑв йулташ) ПСК(б)П историйӗн Кӗске курсне пичетленӗ хаҫатсене уйрӑм папкӑсене ҫӗлесе пырса 5 комплект хатӗрлесе хучӗ. Унсӑр пуҫне ПСК(б)П историн уйрӑм сыпӑкӗсемпе хушса вуламали статйасене хаҫатсенчен, журналсенчен пухса папкӑсем тунӑ. Ҫавӑн пекех Маркс, Енгеԓс, Ленин, Сталин произведенисене т. ыт. литературӑсене пухса уйрӑм полкӑсем организациленӗ. Ытти пособисем те ҫителӗклӗ. Ленинӑн тата Сталинӑн пурнӑҫӗсене, революциллӗ ӗҫӗсене кӑтартакан выставкӑсем организациленӗ.

Парткабинет ҫумӗнче виҫӗ консуԓтант ӗҫлеҫҫӗ—парти райкомӗн пӗрремӗшпе иккӗмӗш ҫекретарӗсем тата парткабинет пуҫлӑхӗ. Ҫапла ӗнтӗ пропагандиссем, коммуниссем, комсомолӗцсем, районри работниксем, учителсем ваԓԓи ПСК(б)П историне, марксисӑм-ленинисӑм теорине тарӑнӑн вӗренме парткабинетра услови пур темеле.

Йулашки вӑхӑтра парткабинета ҫӳрекенсем йышланчӗҫ. Вӗсем парти историне, марксисӑм-ленинисӑм теорипе ҫырнӑ ытти кӗнекесене вулаҫҫӗ. Тӗрлӗ ыйтусемпе консуԓтацисем илсе кайаҫҫӗ. Вӗсен хушшинче пропагандиссем, коммуниссем, комсомолӗцсем, учителсем пур. Анчах районри учрежденисенчи служащисем парткабинета питӗ сахал ҫӳреҫҫӗ. Медицинӑ работникӗсем ҫӳремеҫҫӗ. Ку ӗнтӗ вӗсене ПСК(б)П историне вӗрентес ӗҫе ҫителӗксӗр хутшӑнтарнине кӑтартаԏ.

Парткабинета халӗ коммунисем те, комсомолӑн районри активӗ те ҫителӗксӗр ҫӳрет. Ку вӑл,—вӗсем ҫак таранччен те марксисӑм-ленинисӑм теорине хӑйсем тӗллӗн тарӑнӑн вӗренме ҫителӗклӗ тытӑнманнинчен килет. Парти тата комсомол райкомӗсем те ку ӗҫпе кирлӗ пек ӗҫлемеҫҫӗ-ха.

Районра пропагандиссем тупса райкомра ҫирӗплетнӗ. Вӑл пропагандиссемпе икӗ семинар туса иртернӗ. Йулашки семинар пропагандиссем хӑйсем те парти историне ҫителӗклӗ вӗренсе пыманнине кӑтартрӗ. Чылайӗшӗ пӗрремӗш сыпӑка та вӗренсе пӗтермен. Семинарта вӗсем хӑйсем тӗллӗн вуларӗҫ, вара консуԓтаци илчӗҫ. Тата ПСК(б)П историн уйрӑм сыпӑкӗсене йепле вуласа вӗренекенсене паллаштарни ҫинчен пӗр-пӗрин опычӗсене сӳтсе-йаврӗҫ. Анчах ҫакна калас пулаԏ. Пропагандиссенчен хӑшӗсем халӗ те парткабинета куллен ҫӳремеҫҫӗ-ха (Ваҫилйӗв, Дмитрийӗв т. ыт.). Кунта райкомӑн пропагандиссен ӗҫӗсене час-часах тӗрӗслени, хӑйӗн ларӑвӗсенче вӗсенчен докладсем итлени кирлӗ. Вӗсене парти историне куллен, хӑйсем тӗллӗн вӗренме хӑнӑхтарса пырас пулаԏ.

„Правда" хаҫатӑн окԏабӗрӗн 14-мӗш, 15-мӗш, 17-мӗшӗсенче тухнӑ умстаԏйисем тӑрӑх ПСК(б)П историне вӗрентес ӗҫре парткабинетсен ответлӑхӗ татах пысӑкланмала. Халӗ районри коммуниссенчен, интеллигентсенчен т. ыт. ПСК(б)П историне, марксисӑм-ленинисӑм классикӗсен уйрӑм произведенийӗсене хӑйсем тӗллӗн вӗренес текенсене палӑртса, вӗсене методикӑлӑ пулӑшу пама хатӗрленмеле.

С. Соколов.

Критикӑсӑр иртнӗ пуху

ҪӖРПӲ. Окԏабӗрӗн 16-мӗшӗнче комсомол Ҫӗрпӳ райкомӗ ҫумӗнчи пуҫламӗш организацире отчотпа суйлав пухӑвӗ пулса иртрӗ. Пуху кӑнтӑрла иртсен 4 сехетре кӑтартнӑ срукра пуҫланчӗ.

Комитет ҫекретарӗ Й. Ҫергейӗв йулташ отчотӗнчен ҫакӑ палӑрчӗ: иртнӗ отчотпа суйлав пухӑвӗ пулнӑранпа (15 уйӑх ытларах иртнӗ) пурӗ 7 пуху тата комитет ларӑвӗ 4 пулса иртнӗ. Пухусенче „нумай" ыйтусем сӳтсе-йавнӑ, анчах вӑл ыйтусем тӑрӑх йышӑннӑ постановленисем хут ҫинче ҫеҫ йулнӑ. Ҫтена хаҫачӗ пӗр номӗр те тухман, комсомолӗцсем кружоксенче вӗренмен. Комсомол пуҫламӗш организацин хуҫалӑхне йухӑнтарса йанӑ. 1937 ҫулшӑн пӗр протокол ҫеҫ йулнӑ, ыттисем ҫухалса пӗтнӗ. Йулнӑ пӗртен-пӗр протоколӗ те, докладчик каланӑ тӑрӑх, „чӳт-чӳт ҫухалман, ӑна раймагран тупса килнӗ". Комсомолӗцсем хушшинче дисциплинӑ пулман.

Ҫапла ӗнтӗ комсомол райкомӗ ҫумӗнчи пуҫламӗш организаци ытти организацисене пример кӑтартас, ӗҫлеме вӗрентес вырӑнне хӑй районри чи йапӑх организацисенчен пӗри пулса тӑраԏ. Тӗлӗнмеле, комсомол райкомӗн ҫекретарӗ Иванов йулташ хӑй ӗҫлекен пуҫламӗш организаци ҫапла йапӑхса кайни ҫине мӗнле куҫпа пӑхнӑ-ши?

Пренире 7 комсомолӗц тухса калаҫрӗҫ. Анчах вӗсем комитет ӗҫне пӗртте критиклемерӗҫ. Пухура самокритикӑ пулмарӗ.

Йулашкинчен вара, хӑйсем ӗҫлеменнине ҫын ан пӗлтӗр тесе пулас, комитет ӗҫне „удовлетворитеԓнӑй" хак парса хӑварчӗҫ. Виҫӗ ҫынран комитет суйларӗҫ. К. Михайлӑв.

ОКԎАБӖР УЙАВӖ УМӖНХИ ӐМӐРТУ

Ӗҫҫыннисен активлӑхӗ ӳссех пыраԏ

ВӐРНАР. Районри ӗҫҫыннисем Окԏабӗр уйавне ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илессишӗн ӑмӑртӑва вӑйлатсах пыраҫҫӗ. Вӑрманпромхозра ӗҫлекенсем хушшинче ӑмӑртӑва хутшӑннӑранпа ӗҫ нормине иртерсе тултаракансен хисепӗ ӳссех пыраԏ. Услапа колхозӗнчен вӑрманта йалан ӗҫлеме пынӑ бригадӑ (бригадирӗ Данилӑв йулташ) малтан нормӑна куллен 175 процент тултарса ӗҫленӗ, халӗ хӑшпӗр кунсенче 300 процента йахӑн тултараԏ. Бригадӑ членӗсем ӗҫлесе илнӗ укҫаран 40 процентне колхоза панисӗр пуҫне кунсерен 25-шер тенкӗ ытла илеҫҫӗ. Ҫавӑн пекех Сретенский йулташ йертсе пыракан бригадӑ нормӑна 150 процент тултараԏ. Лучковӑй пӑчкӑпа ӗҫлекен Орлов йулташ производствӑлӑ плана 300 процент тултараԏ. Вӑрманпромхоз уйава пысӑк ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илес тӗлӗшпе Ҫӗмӗрле вӑрман промхозӗпе ӑмӑртӑва тухрӗ.

Йарар рудникӗнче нормӑна тултарман рабочисем пачах ҫук. Иванов, Александрӑв, Йегорӑв йулташсем нормӑна 200 процентран пуҫласа 250 процента йахӑн тултарса пыраҫҫӗ.

МТС-ри тракторӑриссен 12-мӗш номӗрлӗ бригади кӑҫал клевӗр ҫапас плана 130 процент тултарчӗ. Тракторӑристкӑсем пӗр-пӗрин хушшинче социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва сарса йачӗҫ. Ӗҫре Йефимӑвӑ, Степанӑвӑ тата машиновед Антонӑв йулташсем тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Тракторӑристкӑсем ҫунтармалине перекетлесе пыраҫҫӗ. Окԏабӗрӗн 8-мӗшӗнче Степанӑвӑ тракторӑристкӑ пӗр сменӑрах 112 килограм ҫунтармали перекетленӗ.

Булатӑвӑри Молатӑв йачӗпе тӑракан колхоз Окԏабӗр уйавӗ умӗнхи ӑмӑртӑва хутшӑнса ҫитес ҫулхи вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешме пуҫӑнчӗ. Халӗ ҫитес ҫулхи акмали вӑрлӑхсене пӗтӗмпех суртласа хунӑ. Кӗраки тавас плана тултарнӑ. Кӗраки айне 3407 лав ил, 4541 лав торф кӑларнӑ. Кӑҫал Окԏабӗр праҫникӗ тӗлне колхоз пысӑк клуб туса пӗтерет.

Йершипуҫӗнчи „Трудовик" колхоз пайанхи куна вӑрлӑхсене суртласа пӗтернӗ. Кӗрхи ҫӗртме тӑвас плана 100 проценчӗнех пурнӑҫланӑ. Государствӑ умӗнчи парӑмсене татнӑ. Хӗллене хатӗрленес тӗлӗшпе те нумай ӗҫсем тунӑ. Колхоз лайӑх ӗҫленине кура йединоличниксем 35 хуҫалӑх колхоза кӗчӗҫ.

Фананс агенчӗсем Гуҫӗв, Анисимӑв тата Йемелйанӑв йулташсем Окԏабӗр уйавӗ тӗлне 4-мӗш квартӑлти финанс планне 50—75 процент тултарас тӗлӗшпе ӑмӑрту пуҫарса йачӗҫ. Йемелйанӑв йулташ хӑй уйава мӗнле хатӗрленни ҫинчен ҫапла калаԏ:

— Пирӗн финанс ҫекцинче 20 ҫын тӑраҫҫӗ. Епӗр финанс ҫекци членӗсене кашнине уйрӑм участкӑсем ҫумне ҫирӗплетсе тухрӑмӑр. Участкӑри финанс ҫекци членӗсем хӑйсен участкинче финанс планне вӑхӑтра тултарас тӗлӗшпе ответлӑ пулса ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем колхозниксемпе ӗҫҫынни йединоличниксене укҫа-тенкӗ вӑхӑтра парса татмали ҫинчен йаланах ӑнлантарса параҫҫӗ.

Финанс ҫекци членӗсем 4-мӗш квартӑлти финас планне Окԏабӗр уйавӗ тӗлне 75 процент тултарма тӑрӑшаҫҫӗ.

Н. Козлов.

413 процент тултарнӑ

Окԏабӗр уйавӗ умӗнхи социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑннӑ май Шупашкарти „Красный мебельщик" ертел членӗсенчен чылайӗшӗ йаха ӗҫ тӗслӗхӗсем кӑтартаҫҫӗ. Акӑ, сӑмахран, стоԓар А. Борисӑв йулташ август уйӑх планне 97 процент тултарнӑ пулсан, ҫенԏабӗр уйӑхӗнче плана 234 процент тултарнӑ. Ҫавӑн пекех стоԓар Лаврентйӗв йулташ та малтанхи уйӑхсенче нормӑна 234 процент тултарса пынӑскер, окԏабӗр уйӑхӗ пуҫланнӑранпа 278 процент тултарса пыраԏ.

Ӗҫ тулӑҫлӑхне хӑпартас тӗлӗшпе уйрӑмах стоԓар А. Николайӗв йулташ ҫав тери лайӑх примерсем кӑтартаԏ. Ҫенԏабӗр планне вӑл 413 процент тултарса ҫӗнӗ ҫӗнтерӳ турӗ. Халӗ те ырӑ тӗслӗхсем кӑтартса ӗҫлет.

Николайӗв йулташ ӗҫ вырӑнне лайӑх организациленӗ, детаԓсене нихҫан та хӑйӗн станокӗ патӗнче выртармасԏ, йаланах икӗ стоԓар ӗҫлес ӗҫе туса пыраԏ. Вӑл „Спартак" обшчӗстви членӗ. Кӑҫал ворошилӑвла тӗл перекенсен значокӗн тата ГТО значокӗн ҫуллахи нормисене пачӗ. Ҫак ҫулта Николайӗв йулташ ленинла-сталинла комсомол ретне кӗме хатӗрленет.

Л-й.

— о —

Бригадӑсен ӳсӗмӗсем

Республикӑри ытти мӗнпур хапраксемпе савӑтсенчи пекех, Окԏабӗрти Социалисӑмлӑ Аслӑ револуци 21 ҫул тултаракан уйава Шупашкарти строителствӑра ӗҫлекенсем те пысӑк ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илеҫҫӗ. Рабочисемпе работницӑсем хушшинчи ӑмӑрту кунран кунах сарӑлса пыраԏ. Савкин, Блохин т. ыт. йулташсен бригадисем йаланах плана 200 процентран кайа мар тултарса ӗҫлеҫҫӗ. Акӑ, Савкин йулташ бригади ҫенԏабӗрӗн 5-мӗшпе окԏабӗрӗн 11-мӗш хушшинче нормӑна 247 процент тултарнӑ. Бригадӑ членӗсенчен плана тултарманнисем ҫук. Николайӗвӑ йулташ йерсе пыракан хӗрарӑмсен бригади те (бригадӑра 7 ҫын) окԏабӗрӗн малтанхи ҫуруйӑхӗнче плана 114,5 процент пурнӑҫа кӗртнӗ.

Савкин йулташ бригади окԏабӗр уйавне нормӑна 250 процентран кайа мар тултарнипе кӗтсе илме пулаԏ.

Дмитрийӗв.

— о —

Ӑмӑртса ӗҫлетпӗр

Епӗр, Ишлей разйезӗнчи движенӗцсем, аслӑ уйава хатӗрленнӗ май, Шупашкар станцинчи движенӗцсене ӑмӑртӑва чӗнсе хамӑр ҫине кашнийех стахановӗцсен ретне тӑма, пӗр аварисӗр, простойсӑр ӗҫлеме, ӗҫ вӑхӑтне 100 проценчӗпех усӑ курма обйазателствӑ илтӗмӗр.

Халӗ илнӗ обйазателствӑна ӑнӑҫлӑн тултарса пыратпӑр. Ҫав вӑхӑтрах ернере икӗ хутчен политзаԓати иртеретпӗр.

Стрелочник—Пуԓков.

Кирӑв йачӗпе тӑракан шкулта

Кӑҫалхи ҫенԏабӗр пуҫламӗшӗнче Ростов хулинчи шкулсенче вӗренекен ачасем Совет Сойузӗнчи пионерсене тата вӗренекенсене комсомол ваԓԓи лайӑх парне хатӗрлес майпа социалисӑмлӑ ӑмӑрту организацилеме чӗнчӗҫ. Шкулта отличнӑ вӗренни тата пӗр класра икӗ ҫул хушши вӗренессине пӗтӗмпех пӗтерни—чи лайӑх парне пулса тӑраԏ,—тесе ҫырчӗҫ вӗсем хӑйсен чӗнӗвӗнче.

Шупашкарти Кирӑв йачӗпе тӑракан 5-мӗш №-лӗ шкулти пионерсем тата вӗренекенсем Ростоври шкул ачисен чӗнӗвне пысӑк хаваспа йышӑнчӗҫ, ӑна вӗсем отрйад сборӗсенче, звеносенче, кашни класра сӳтсе-йавнӑ. Халӗ ку шкулти кашни пионер тата кашни вӗренекен пӗр-пӗринпе, звенопа звено, класпа клас ӑмӑртаԏ. Отличнӑ вӗренӳшӗн кӗрешессинче чи лайӑх организатӑр „Пионер сасси" йатлӑ ҫтена хаҫачӗ пулса тӑраԏ. Шкулта ӑмӑрту мӗнле пынине кӑтартас майпа кунта учот хӑми тунӑ, ку хӑма ҫине кашни пилӗккунлӑхра классем тӑрӑх ӑмӑрту ӗҫӗ мӗнле пынине ҫыраҫҫӗ.

Пионерсемпе шкулта вӗренекенсем харпӑрхӑйӗн уйрӑм парнисене хатӗрлеҫҫӗ, хӑйсен парнисене вӗсем шкулта окԏабӗрӗн 25-мӗшӗнче уҫӑлакан выставкӑра кӑтартса параҫҫӗ. Кунта питӗ интереслӗ парнесем пулаҫҫӗ. Сӑмахран, 6-мӗш класра вӗренекен Виԏӑ Коԓайӗв самоԓотӑн схемӑлӑ модеԓне хатӗрлет. Ҫав класрах вӗренекен Виԏӑ Борисӑв планӗр моделӗ, Гаврилӑв комсомол пурнӑҫӗпе ӗҫӗсенчен илнӗ ӳкерчӗксен аԓбомне хатӗрлеҫҫӗ. Ачасен тӗрлӗрен парнисем хушшинче електромашинӑсен моделӗсем тата хӗрачасен илемлӗ тӗррисем тата ыт. пулаҫҫӗ. 7-мӗш класра вӗренекен хӗрачасем хӑйсен тӗррисенчен выставкӑ тӑваҫҫӗ; вӗсен шкулта тӗрӗ кружокӗ те пур, кружока класри отличницӑ Ритӑ Резӳковӑ йертсе пыраԏ.

Комсомолӑн чаплӑ йубилейне хатӗрленнӗ май, пионерсемпе вӗренекенсем шкулти кружоксен ӗҫне те лайӑхлатассишӗн хытӑ кӗрешеҫҫӗ. Халӗ кунта литературӑ тата радио кружокӗсем лайӑх ӗҫлеҫҫӗ. 17 ҫын „Ҫамрӑк ворошилӑвла стрелок" значокне, 47 ҫын „Санитари оборонине хатӗр пул" значокне илме хатӗрленеҫҫӗ.

Окԏабӗрӗн 29-мӗшӗнче шкулта йубилей вечӗрӗ пулаԏ. И. А. Афонинӑ тата Горскайа преподавателсем йертсе пынипе шкул ҫумӗнчи хор йурӑсем йурласа параԏ, физкуԓтурӑ кружокӗ тӗрлӗрен вӑйӑсем кӑтартса параԏ. Вечӗрта литературӑ монтажӗ пулаԏ. Декламаци, ташӑсем пулаҫҫӗ. Вӑл кун Кирӑв йачӗпе тӑракан шкулта нихҫанхинчен те савӑнӑҫлӑ пулаԏ.

И. Лукинский.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: аслӑ лейтенант П. С. Оԓховик подразделенийӗнчи оруди расчотӗнчи комсомолӗцсем, вӑл подразделени Хасан кӳлли патӗнчи ҫапӑҫусенче Йапонин пӗр батарейне тата икӗ ротӑри салтаксене пӗтерсе тӑкнӑ. Варринче—подразделени командирӗ Оԓховик йулташ (1938 ҫулти август уйӑхӗ).

В. Темин фото-ӳкерчӗкӗ (Сойузфото).

Китайри троцкисла бандитсем Йапони разведкин службинче

1938 ҫулти ҫенԏабӗр уйӑхӗнче Китайӑн информаци бӳровӗ Йапони шпионӗсен Китайри ӗҫӗсем ҫинчен материал пичетлесе кӑларнӑ. Вӑл материал Китайри троцкиссем, професҫилӗ бандитсем тата провокатӑрсем, Йапони разведкине тара кӗрӗшнӗ шпионсем пулса тӑнине тата тепӗр хут уҫҫӑн кӑтартса параԏ. Йапони военшчини ҫав шпионсем урлӑ Китай ҫарӗн речӗсене хавшатма хӑтланаԏ. Ҫуйчжоуна тытса илнӗ ҫӗрте троцкисла бандитсем йапонӗцсене пысӑк пулӑшу панӑ. Йапони Китай ҫине тапӑнса пыракан районсенче — Хебей, Шаԣдун, Шаԣси, Чахар тата Суййуаԣ провинцисенче ӗҫлекен шпионсем хушшинче троцкиссем паллӑ вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ, вӗсем ҫав районсенче йапонӗцсене пулӑшас йенӗпе сахал мар ирсӗр ӗҫсем туса пыраҫҫӗ.

Йапони разведчикӗсене хӑйсен хуҫи ҫар йенӗпе кирлӗ картӑсемпе документсене пухма хушнипе пӗрлех, Китай правителствине хирӗҫ восстанисем тӑвас йенӗпе те активлӑн ӗҫлесе пыма хушнӑ. Йапони шпионӗсен Китай влаҫӗсем хушшинче тӗрлӗ хирӗҫӳсем кӑлармала, халӑхсем хушшинче пӗрне-пӗри кураймanлӑха вӑйлӑн сарса пымала. Ҫаксене пурнӑҫа кӗртес ӗҫе троцкисла провкатӑрсемпе бандитсене йавӑҫтарма хушнӑ.

Троцкисла бандитсем Йапони разведкине пысӑк усӑ параҫҫӗ. Вӗсем Йапони разведки хушнипе ҫынсене вӗлерессине, пуйӑссене крушенисем тӑвассине организацилеҫҫӗ, бомбӑсем пӑрахаҫҫӗ, вут чӗртсе йараҫҫӗ т. ыт. те.

„Хуамэй Уикли" журнал ҫапла ҫырса пӗлтерет: Китайри троцкиссем хӑйсен сӑтӑрла ӗҫӗсенче нимрен ытла провокациллӗ майсемпе анлӑн усӑ курма тӑрӑшаҫҫӗ. Провокациллӗ ӗҫсем туса, Йапони агреҫҫине хирӗҫ кӗрешес ҫӗрте Китай халӑхне чи кирлине—коммуниссен партипе гоминдан хушшинчи пӗрлӗхе пӑсма хӑтланаҫҫӗ. Журнал троцкиссен провокациллӗ ирсӗр ӗҫне уҫҫӑн кӑтартса пама „Синԣхуажибао" хаҫата (Китай компартин органӗ) йӗркелӗ ӗҫлеме чӑрмантарнӑ тӗслӗхе илсе ҫырнӑ. Унтан журнал троцкиссемпе вӗсен организацийӗсен вӑрттӑн ӗҫӗсене тӑрӑ шыв ҫине кӑларса, вӗсене тӗпӗ-йӗрӗпех пӗтерсе пыма ыйтаԏ.

Китайри троцкиссем хӑйсем пӗтӗм вӑйне Китай компартине хирӗҫле ӗҫсем тӑвас ҫӗре хунӑ. Мӗншӗн тесен Китай компартийӗ Йапонине хирӗҫ нациллӗ пӗрлӗх фронтне туса ӑна ҫирӗплетекен пысӑк вӑй пулса тӑраԏ. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ троцкиссем, Йапони империалисӑмӗ панӑ заказсем тӑрӑх, Йапонийе хирӗҫле нациллӗ пӗрлӗх фрончӗ ҫине урса кайсах тапӑнса пыраҫҫӗ.

Йапони разведкинче нумай ҫул хушши службӑра тӑракан троцкисла бандитсем, Йапонин Китайри тискер ӗҫӗсене шӑлса лартма май пултӑр тесе, „боԓшевиксен хӑрушлӑхӗ", „хӗрлӗ империалисӑм" тата ытти ҫавнашкал усал сӑмахсем сараҫҫӗ, ССРС ҫине елеклеҫҫӗ. Вӗсем: Йапонине хирӗҫ тӑни ахалех пулаԏ, тесе хӑратасшӑн. Вӗсем Китай халӑхне Йапони самурайӗсем умӗнче пуҫ тайтарасшӑн, Китайа хирӗҫмесӗрех Йапони аллине кӗртесшӗн.

1928 ҫултах троцкиссем, сылтӑмри предателсемпе — чеԓдусӳиссемпе пӗрлешсе, Китайри совет районӗсем пулнӑ ҫӗрте—аслӑ Китай халӑхӗн нациллӗ ирӗклӗхӗшӗн пыракан кӗрешӗвӗн вучахӗ пулса тӑнӑ районсенче — хӑйсен ирсӗр ӗҫӗсене туса пыма тытӑннӑ. Унчухнех вӗсем Китай Хӗрлӗ ҫарӗн ҫулпуҫӗсене тыта-тыта панӑ, шпионла ӗҫсем туса пынӑ пулнӑ.

1932 ҫулта, XIX арми Шанхайа Йапони захватчикӗсенчен паттӑрӑн сыхланӑ чухне, троцкиссем вӑл оборонӑна ҫӗмӗрсе тӑкма хӑтланнӑ. Троцкиссем тӗрлӗ провокациллӗ ӗҫсем организациленӗ, суйа елексем сарнӑ. Йапони разведкин агенчӗсем троцкиссем Пен Цешан, Ту Ве-цын т. ыттисем те 1934 ҫулта XIX армин руководствине хӑйсен аллине илсе, вӑл ҫара салатса йама, Фуцзйаԣ провинцинчи халӑх правителствипе ҫар хушшинче Йапонине хирӗҫле килӗшӳ тӑвас ӗҫе пӗтерсе лартма пикеннӗ.

Ҫав политикӑлӑ ирсӗрсен хушшинче чи тискерри ку таранччене, тытса хупиччченех, троцкисла предател Чжан Муо-тао пулса тӑнӑ. Вӑл 1932 ҫултах йапонӗцсене сутӑннӑ, вӗсенчен укҫа-тенкӗ илсе тӑрса, ҫурҫӗр Китайра „Йапонине хирӗҫ тӑрас пулсан, чӑн пирвайах Чан Кай-шине хирӗҫ кӗрешмеле" текен лозунгпа пропагандӑ сарнӑ пулнӑ. Вӑлах Китай халӑхӗ хушшинче тӗрлӗ хирӗҫӳсем кӑларса пӗр-пӗринпе вӑрҫӑ пуҫарса йарас тӗлӗшпе ӗҫленӗ. Ҫавӑн пек вӑрҫӑ Китай халӑхӗн вӑй-хӑватне хавшатса Йапони захватчикӗсен умӗнче пӗр чӑрмавсӑрах парӑнмали условисем туса хума пултарнӑ пулӗччӗ. 1933 ҫулта Чжан Муо-тао Пекинре пуканеле правителствӑ туса хурса, вӑл правителствӑ руководителне У Пей-фуна лартма шухӑшланӑ. Ҫав кулӑшла правителствӑ хӑйӗн пӗтӗм ӗҫне центрти правителствӑна хирӗҫле туса пымала пулнӑ. Анчах, ҫакӑн пек хӑтланӑва пурнӑҫа кӗртеймен. Загӑвӑра ҫийӗнчех тупса палӑртнӑ.

Чжан Муо-тао Йапони захватчикӗсен: „Китайа китайӗцсен аллинех пӗтермеле" тенӗ кӑтартӑвне пурнӑҫа кӗртсе пынӑ. 1935 ҫулта, Сианԓри событисем пуҫлансассӑн, вӑл каллех Китай халӑхне пӗр-пӗрни ҫине вӑрҫа кӑларас йенӗпе провокациллӗ ӗҫсем тӑваԏ. Китай халӑхӗн ҫав ылхануллӑ тӑшманӗ Чан Кай-шине вӗлерме чӗнет. Анчах ку плана та пурнӑҫа кӗртеймест вӑл. Ҫакӑн хыҫҫӑн вара троцкиссем Йапонине хирӗҫле генералсенчен пӗрне—Ван И-Чже генерала вӗлерес ӗҫе организацилеҫҫӗ.

Лӳкоуцзйаори инцидент умӗн,—Йапони Китайа хирӗҫ тухнӑ вӑрҫӑ ҫавӑнтан пуҫланса кайнӑ,—обер-бандит Троцкин ҫывӑх йулташӗ Чжан Муо-тао „Хӗвелтухӑҫ Азири куԓтурӑлӑ ассоциаци" текен предателле организацине туса хураԏ. Вӑл организаци Йапони разведки ваԓԓи тӗрлӗ шпионла сведӗнисем пухнӑ. Китайри вӑрҫӑ пуҫланнӑ хыҫҫӑн троцкиссем уйрӑмах пикенсе, ҫине тӑрса ӗҫлеме тытӑнаҫҫӗ. Вӗсем бандитла отрйадсем организацилесе, вӑл отрйадсене Йапонийе хирӗҫле ҫарӑн отрйачӗсем, тесе йат парса витеҫҫӗ. Бандитсен отрйачӗсем Китай халӑхӗшӗн вӑл вӑхӑтра питех те кирлӗ пулса тӑнӑ хӗҫпӑшалсене халӑхран турта-турта илнӗ, халӑха хӗҫпӑшалсӑр тӑратса хӑварнӑ. Чжан Муо-тао троцкисла обер-шпионсемпе ӗҫленипе пӗрлех, сутӑнчӑклӑ милитариссемпе—Ван Гун-ду, Луйун т. ыт. ҫавсем пек ирсӗрсемпе ҫыхӑнса кайса, Китай ҫарне, Китай халӑхне хирӗҫ бандитсен шайкине пухса пынӑ.


Троцкисла шайкӑри Ван Гун-ду Гуанси провинцине тылран вӑйлӑн тапӑнма пикенет. Гуанси ҫарӗсем фронта тухса кайнӑ вӑхӑтра троцкист Ван Гун-ду ҫара пӑлхатма пикенет тата Йапони захватчикӗсем умӗнче чӗркуҫҫи ҫине лартма чӗнет. Тылра чӑрмавсем кӳрес тесе, троцкис Хуан Гоу-то пӑлхав организацилесе Гуанси провинцине троцкисла ирсӗрсен аллине илме хӑтланаԏ. Анчах предателлӗ загӑвӑра вӑхӑтра тупса палӑртнӑ, ҫав загӑвӑрӑн организатӑрӗсем пулнӑ 12 ҫынна персе пӑрахнӑ.

Хенаԣ провинцинче вырӑнти троцкиссем Китайӑн советла районӗсем пулнӑ ҫӗрте партизан отрйачӗсенчен тунӑ халӑхӑн тӑваттӑмӗш револуциле ҫарне хирӗҫ кӗрешме хӗҫпӑшаллӑ отрйадсем организациленӗ.

Кӑҫал Китайӑн уйрӑм районӗсенче шпион-диверсант Чен Чун-син троцкиса арӗсленӗ. Ӑна ҫав района Гласс текенскер, пӗр вӑхӑтра обер-бандит Троцкий хушнипе Шанхайа пынӑскер, йанӑ пулнӑ. Шанхайра, Йапони полицийӗ пулӑшнипе, Йапони разведкин агенчӗ троцкис Хуан Пин ӗҫлеме тытӑннӑ.

Китайри троцкиссем чи ирсӗр провокацисем тӑваҫҫӗ. Вӗсем тӗрлӗ ултавлӑ майсемпе коммуниссен парти ретне хӗсӗнсе кӗреҫҫӗ те, коммунис йачӗпе витӗнсе, ҫар йенӗпе кирлӗ шпионла сведӗнисем пухаҫҫӗ, ҫак ӗҫре вӗсем компарти тата 8-мӗш ҫар ретне хӗсӗнсе кӗнӗ прадателлӗ ҫынсене хӑйсен майлӑ ҫавӑрса, вӑл ҫынсене сутӑн илсе усӑ кураҫҫӗ. Троцкиссем хӑйсен Йапонири хуҫисенчен йаланах укҫа-тенкӗ илсе тӑраҫҫӗ. Акӑ, сӑмахран, ҫурҫӗрти провинцисенче ӗҫлекен троцкисла ушкӑн кашни уйӑхрах хӑйсен Йапонири хуҫисенчен 100 пин доллар укҫа илсе тӑраԏ. Вӗсем вара ҫав укҫапа ҫынвӗлерекенсене тара тытаҫҫӗ те, вӑл ҫынсене компартин тата 8-мӗш ҫарӑн руководителӗсене вӗлерес йенӗпе ӗҫлеме хушаҫҫӗ. Китайри троцкисла организацисем пурте

(Йулашки 4-мӗш страницӑра)



III-мӗш Империнче

— Ачасем, есӗр мӗскер тӑвасшӑн: вуласшӑн-и йе çырасшӑн?
— Епӗр çиесшӗн

Б. Анфилӑв ӳкерчӗкӗ („Пресс-клише").

Китайри вӑрçӑ

Кӑнтӑр Китайра, Вейчжоуран çурçӗр-хӗвеланӑç йенче, Боло патӗнчен хӗвеланӑç йенче хайар çапӑçусем пыраççӗ. Китай çарӗсем, Цзенчен йенчен контрнаступлени туса, йапонӗçсене Боло патне хӑваласа йанӑ.

Йапонӗçсем хӑйсен тӗп вайӗсене Вейчжоуна Боло хушшинче пухаççӗ.

Кӑнтӑр Китайри фронта Китай самолӗчӗсен темиçе ескадрилйи пырса çитнӗ, вӗсем октаберӗн 19-мӗшӗнче йапонӗçсен позицийӗсем çине пит те анӑçлӑн бомбӑсем пӑрахнӑ.

Октаберӗн 18-мӗшӗнче Йапони авиацийӗ Шилун хули çине 200 бомбӑ ытла пӑрахнӑ.

Центр Китайра, Цзуцзйанран хӗвеланӑç йенче, Саӈчикоуна туртса илнӗ хыççӑн йапонӗçсем малалах наступлени туса пыраççӗ. Саӈчикоу районӗнче хайар çапӑçусем пыраççӗ. Вӑл районра йапонӗçсен тӗп тӗллевӗ —Кантон Хаӈкоу чукунçулӗ çине тухасси, унтан вара кӑнтӑр йенчи Хаӈкоу çинеле наступлени туса пырасси. Хаӈкоуран çурçӗр йенче, Бейпин —Хаӈкоу чукунçулӗ çинче, хайар çапӑçусем пыраççӗ. Фронтӑн вӑл линийӗ йапонӗçсем Ухаӈ çинеле чи вайлӑн наступлени туса пыракан çул.

Йанцзы йуханшывӗ çинче Китайӑн çыран çинчи артиллерийӗ Йапонин 7 çар транспӑртне сийенленӗ, вӗсенчен тӑваттӑшне стройран кӑларнӑ. (ТАСС).

Йапони авиацин пысӑк çухатӑвӗ

Октаберӗн 18-мӗшӗнче Гуандун провинцин (Кӑнтӑр Китайра) çурçӗр йенчи пайӗнче сывлӑшра пысӑк çапӑçу пулса иртнӗ. Сывлӑшри çапӑçура китайӗçсем Йапонин 30 самолӗтне персе антарнӑ. (ТАСС).

Айкс сӑмах тухса каланӑ

Çак кунсенче Лос-Анжелосра пулнӑ митингра Америкӑри Пӗрлешӳлӗ Штатсенчи шалти ӗçсен министрӗ Айкс сӑмах тухса каланӑ.

„Фашисӑм, тенӗ Айкс, Америкӑри демократине те хӑратакан йапала вӑл. Океансен леш йенчен вӑтам ӗмӗрти тискерлӗхӗн тӗксӗмӗ кайала çавӑрӑнса килни курӑнать. Фашиссен тискерлӗхӗ вӑтам ӗмӗрти хӑрушлӑхсенчен те ытларах пулса тӑчӗ. Çавӑн пекех фашиссен аллинче етемлӗхе пӗтерме кучухнехи хатӗрсем мӗн кирли пурте пуррине те манмала мар пирӗн". (ТАСС).

„Руде право" хаçата кӑларма чарнӑ

Чехословакин шалти ӗçсен министрӗ хушнӑ тӑрӑх, Чехословакири коммунисла партин тӗп органне „Руде право" хаçата тата „Гало новины", „Веӈт ам Морген" хаçатсене кӑларма чарса лартнӑ. Чехословаки компартин Тӗп Комитет тата коммунисла хаçатсен редакци çурчӗсене полицисем йышӑннӑ. Компартин Тӗп Комитет çуртне ухтараççӗ. (ТАСС).

Чехословакире пӗрлӗх фрончӗшӗн пыракан йухӑм

Чехословакире пӗрлӗх фрончӗшӗн сарӑлса пыракан йухӑма кашни кунах ӗççыннисен çӗнӗрен çӗнӗ йышӗ хутшӑнать. Металлисем, строителсем, полиграфи промышлӗннӑçӗнчи рабочисем тата учителсем пӗрлӗхлӗ сойуз тума йышӑннӑ хыççӑнах, пир-авӑр промышлӗннӑçӗнче ӗçлекенсен професçилӗ сойузӗн членӗсем те пӗрлӗхлӗ сойуз тӑвасси çинчен каласса тытӑннӑ.

Социалисла партисен вырӑнти комитечӗсем хӑйсен тӗп комитечӗсене хӗстерсе пырса рабочисен пӗрлӗхлӗ партине тӑвассине пурнӑçа кӗртсе пыраççӗ. Кладно хулинче (вӑтаçӗр Чехинчи пысӑк промышлӗннӑçлӑ центр) чехсен социал-демократла, социалиссен тата коммуниссен партисен районри комитечӗсем „пӗрле ӗçлемели комитет" туса хунӑ та ӗнтӗ. Вӗсем виçӗ партин руковфдствисем патне çыру йанӑ, вӑл çырура пӗтӗм республикӗпе пӗрлӗхлӗ парти тӑвасси çинчен халех калаçу пуçарма ыйтнӑ. (ТАСС).

Поӈшӑн Совет Сойузне хирӗçле хӑтланӑвӗсем

Поӈшӑн йут çӗршыв ӗçӗсен министрӗ Бек, Румынире йулашки хут пулнӑ вӑхӑтра, Румыни короллӗпе нумай вӑхӑт калаçнӑ. Хаçатсем çырнӑ тӑрӑх пӑхсан, çакӑ курӑнать: Бек Поӈшӑпа Венгри хушшинче пӗрлештерӳлӗ чикӗ тӑвассипе çыхӑнса тӑракан, виçӗ государствӑран (Поӈшӑ—Румыни—Венгри) Совет Сойузне хирӗçле блок тӑвассипе çыхӑнса тӑракан ыйтусене сӳтсе-йавма кӑларса тӑратнӑ. (ТАСС).

Китайри троцкисла бандитсем Йапони разведкин службинче

(Й У Л А Ш К И)

Йапони панӑ укçапа тытӑнса тӑраççӗ. Троцкиссем çав укçана Китай халӑхӗн йунӗпе саплаççӗ. Йапони çарӗсем малала кайса пыни троцкиссем шпионла ӗçсем, диверçисем, провокацисем, загавӑрсем тунинчен тата çынсене вӗлерес ӗçе организацилениnчен нумай килнӗ.

Китай çарӗ кӗрешӳре çапӑçса пиçӗхсе пынӑçемӗн Китай халӑхне йун ӑшне путарма ӗмӗтленекенсен —етемлӗхӗн ирсӗр йулашкийӗсен хайарлӑхӗ те ӳссе пырать. Китайӑн хӑшпӗр фронтсенче час-часах йӑвӑрлӑхсем тӳссе иртермеле пулать, етемлӗхӗн ылханлӑ тӑшманӗсем Китай халӑхӗ çав йӑвӑрлӑхсене тӳссе иртернишӗн хӗпӗртесе савӑнаççӗ.

Акӑ мӗншӗн ӗнтӗ Китай компартийӗ пӗтӗм халӑха сисӗмлӗхе ӳстерсе Йапони разведкин службинче тӑракан троцкисӗн урса кайнӑ бандине сӑтӑрçӑсен, диверсантсен, шпионсен тата сынвӗлеренсен шайкине хирӗç, фашисла йытӑсен ушкӑнне хирӗç хайаррӑн кӗрешсе пыма чӗнет.

Агрессӑрсемпе кӗрешесси, тӗнчен çӗнӗ вӑрçине чӗртсе йарасси шӗн хыпса çунакан фашиссене хирӗç кӗрешесси фашисӑмӑн ирсӗр тарçисене, троцкиссене, çӗр çинчен йалтах шӑлса пӑрахас задачӑпа уйӑралми çыхӑнса тӑрать. Çав „реçресен йӑвине пӗтемпех çӗмӗрсе тӑкни Китай халӑхне çӗнтерӳ патне хӑйулӑн пыма çул тасатса хуни пулса тӑрать.

Сталин йулташ çапла кӑтартса панӑ: „Вӑрçӑ вӑхӑтӗнче çапӑçура çӗнтерме красноармейӗçсем темиçе корпус кирлӗ пулма пултарать. Фронтра çав çӗнтерӗве пӗтерсе хума вара, ӑна тума ӑçта та пулсан арми штабӗнче йе дивизи штабӗнче кӑна ларса оперативлӑ плана вӑрласа тӑшмана пама пултаракан шпион темӗн чул кирлӗ мар". Пӗтӗм тӗнчери ӗççыннисен çулпуçӗн çак кӑтартӑвӗсене шута илсе, Китайри компарти троцкисла преступниксен бандине тӗпӗ-йӗрӗпех пӗтерсе хума тӑрӑшать. Компарти тата пӗтӗм Китай халӑхӗ Йапони фашисӑмӗн тарçисене хирӗç хайаррӑн кӗрешсе пыраççе.

ССР Сойузӗ ирсӗр троцкиссене, зиновйӗвӗçсене, бухаринӗçсене тата ытти çавнашкал фашисла разведкӑсене тара кӗрешнӗ çынвӗлеренсемпе шпионсене хирӗç хайаррӑн кӗрешсе пыни—Китай халӑхӗшӗн чаплӑ пример пулса тӑрать. Китай правителстви Йапонин Китайри троцкисла агенчӗсене пӗтӗмпех пӗтерсе хурас ӗçе татӑклӑнах тытӑннӑ. Китай халӑхӗ çав ирсӗрсене йалтах пӗтерме ыйтать, вӗсене пӗри йулмиччӗнех пӗтерсе хураççӗ те.

С. АЛЕКÇЕЙӖВ.

Апат-çимӗç промышлӗннӑç Халӑх Комиссариачӗн актив канашлӑвӗ

Çак кунсенче Шупашкарта Чӑваш АССР Апат-çимӗç промышлӗннӑç Халӑх Комиссариачӗн актив канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Канашлу иртнӗ 9 уйӑх хушшинчи ӗçсем тата йулашки 4-мӗш квартӑлти план çинчен сӳтсе-йаврӗ. Ку ыйту тӑрӑх канашлу Апат-çимӗç промышлӗннӑç Халӑх Комиссарӗн Красиӈникӑв йулташ докладне тата Антонӑв (Йетӗрнери çу савӑчӗ), Беӈанкин (Шупашкарти макарон хапрӑкӗ), Недеров (Кавалти крахмал савӑчӗ) йулташсен содоклачӗсене итлерӗ.

Апат-çимӗç промышлӗннӑçӗ пӗтӗм промышлӗннӑç планне тултарнӑ çӗрте пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Вӑл пӗрлештерсе тӑракан 26 предприйатин тата пулӑ тытакан фермасемпе колхозсен кӑçал 4791,5 пин тенкӗлӗх продукци кӑлармала. Апат-çимӗç промышлӗннӑçӗ пуринчен ытларах ӗççыннисене куллен кирлӗ таварсем кӑларнине шута илсен унӑн ӗçӗсем халӑх хуçалӑхӗнче пысӑк пахалӑхра тӑни уççӑнах курӑнса тӑрать.

Кӑçалхи иртнӗ виçӗ квартӑл хушшинче апат-çимӗç промышлӗннӑçӗ, пӗтӗм халӑх хуçалӑхӗпе пӗрлех, пысӑк ӳсӗмсем турӗ. 9 уйӑх хушшинче иртнӗ çулти çав вӑхӑтринчен ытларах 1481 пин тенкӗлӗх продукци панӑ. Пӗтӗмӗшпе илсен 9 уйӑхри плана 154,7 процент тултарнӑ. Анчах, калас пулат, ку ӳсӗмсем пурнӑçа кӗртме çӑмӑлтарах ӗçсем тӑрӑх пулса пынӑ. Кирлӗ, ответлӑ участкӑсем çаплах начар ӗçлесе пыраççӗ-ха.

Шупашкарти макарон хапрӑкӗ мӗн çулталӑк пуçланнӑранпах плана тултарса пыраймасть. Виçӗ квартӑл хушшинче государствана макарон таварӗсем 148 тоннӑ парайман. Сӑлтавӗ ӑнӑçлӑн ӗçлеме условисем пулманнинче мар, хапрӑк руководителӗсем тӑшмансем туса хӑварнӑ сӑтӑрлӑха пӗтерессишӗн татӑклӑ кӗрешӳ пуçарманнинче. Унта аварисем час-час пулаççӗ. Анчах хапрӑк руководителӗсем аварисене хирӗç хайар кӗрешӳ пуçарас вырӑнне, „оборудованисем кивӗ, аварисем пулма пултараççӗ" тесе хӑйсене лӑплантарса пынӑ. Унта стаханӑвла йухӑма йертсе пымаççӗ. Çавӑнпа ӗç тухӑçлӑхне ӳстерес плана 26 процент тултарса çитермен.

Пулӑ хуçалӑхӗ плана тултарассине хӑрушлӑх умне хӑварнӑ. Унта спекуӈантла ӗçсем тӑвасси чылай сарӑлнӑ. Ун çинчен сигналсем те пӗр хут çеç пулман. Апла пулин те Заикинпа Пузырйов йулташсем ӗçе йӗркелес тӗлӗшпе татӑклӑ ӗçсем тума тытӑнман-ха. Районсенчи промышлӗннӑç та нумай мала кайман.

Крахмалтрест хӑйӗн 9 уйӑх планне тултарнӑ. Анчах вӑл хӗллене хатӗрленес ӗçе тивӗçлипе тытӑнман-ха. Чӗр тавар хатӗрлес ӗç иртнӗ çулхинчен те вӑрах пырать.

Канашлура тухса калаçакансем уйрӑм участкӑсем кайа йулса пырасси чи малтанах тӑшмансем туса хӑварнӑ сӑтӑрлӑха пӗтерессишӗн тимлӗн кӗрешменнинчен, стаханӑвла йухӑма йертсе пыманнинчен килсе тухнине фактсемпе çирӗплетсе пачӗç. Йетӗрнери çу савӑтӗнче пӗр иӥуӈ уйӑхӗнче кӑна пӗтӗм ӗç вӑхӑтӗнчен 44 процент простойсем пулнӑ. Кунашкал фактсем „Чӑвашмаслопром" тата ытти предприйатисенче те сахал мар. Предприйати руководителӗсем аварисене, простойсене хирӗç кӗрешме мар, вӗсене хисепе те тӗплӗн илмеççӗ. Çавнашкал пулнӑ Шупашкарти макарон хапрӑкӗнче.

Кӑçал çулталӑк пуçламӗшӗнче апат-çимӗç промышлӗннӑç предприйатисенче стаханӑвӗçсем 105 çын, ударниксем 99 çын пулнӑ. Хаӈхи вӑхӑтра стаханӑвӗçсем 60 çын, ударниксем 39 çын шутланаççӗ. Стаханӑвӗçсемпе ударниксен хисепӗ чакнине предприйатисен, Халӑх Комиссариачӗн руководителӗсем стаханӑвла йухӑм çине тимсӗр пӑхнипе, унӑн хӑватлӑ вӑйне курмасӑр тӑнипе хакланисӗр пуçне урӑх нимӗнле те сӑлтавлама май çук. Фактсем те çавӑн çинчен калаççӗ. Йетӗрнери çу савӑчӗн директӑрӗ Антонӑв виçӗ уйӑх хушши ӗçлесе те пӗр рабочийе стаханӑвӗç пулма пулӑшман. Нихӑш предприйатире те техникӑна вӗренес ӗçе йӗркелемен.

Апат-çимӗç промышлӗннӑçӗн йулашки 4-мӗш квартӑлта 3 мӗлйун тенкӗлӗх продукци кӑлармала. Ку иртнӗ 9 уйӑх хушшинче кӑларнӑ продукци хисепӗнчен кӑшт кӑна кайарах. Унсӑр пуçне тата капиталӈнай строителства йенӗпе пысӑк ӗçсем пурнӑçа кӗртмеле.

План пур, ӑна пурнӑçа кӗртме кирлӗ условисем те çителӗклӗ. Апат-çимӗç промышлӗннӑç Халӑх Комиссариачӗн, предприйати руководителӗсен ПСК(б)П Чӑваш организацин облӑçри XIX-мӗш конференцийӗ кӑтартса панине пурнӑçа кӗртмеле тӑвассишӗн халех татӑклӑ ӗçсем тумала. Халӗ пӗтӗм çӗршывра Октабӗр уйавӗ умӗнхи социалисӑмлӑ ӑмӑрту сарӑлса пырать. Ӑмӑртӑва пур рабочисене те йавӑçтарса стаханӑвла йухӑма массӑлӑ йухӑм туса хумала. Рабочисен, инженерлӑ-техниклӑ работниксен политикӑлӑ тата производствӑлӑ пысӑк активлӑхне сӑтӑрлӑха хӑварттӑн пӗтерессишӗн кӗрешнӗ çӗре организацилесе, çулталӑкри плана ӑнӑçлӑн вӗçлесе çитермеле тӑвас пулать.

Суту-илӳ уйав вӑхӑтӗнче

Чебторгӑн Шупашкарти магазинӗсем Октабӗр уйавӗ умӗн ахаӈ чухнехи пек мар, ытларах вӑхӑт ӗçлеççӗ.

Промтаварсем сутакан 2, 4 тата 6 номӗрлӗ магазинсем октаберӗн 25-мӗшӗнчен пуçласа ытти чухнехинчен 2 сехет ытларах ӗçлеççӗ.

Предприйатисенчи ларйоксем, çимӗç ларйокӗсем нойаберӗн 4-мӗшӗнчен пуçласа 2 сехет ытларах сутӑ тӑваççӗ. Праçник кунӗсенче ирхине 7 сехетрен пуçласа 11 сехетчен, кӑнтӑрла иртни 3 сехетрен пуçласа ытти чухнехи вӑхӑтчен ӗçлеççӗ. 1 тата 3 номӗрлӗ çимӗç магазинӗсем уйав кунӗсенче ирхине 7 сехетрен пуçласа 11 сехетчен, кӑнтӑрла иртни 3 сехетрен пуçласа каçхине 11 сехетчен сутӑ тӑваççӗ.

Магазинсем уйав чухне ачасен утренникӗсенче ачасене кучченеçсем пама учрежденисенчен киле пырса пама конфет, гастрономи çимӗçӗсемпе т. ыт. заказ йышӑнаççӗ. Парти вӗрентӗвӗн çурчӗ айӗнчи магазин ачасем ваӈӈи тӗрлӗ çимӗçсенчен пӗчӗк буфетсем хатӗрлет.

Уйав кунӗсенче демонстрантсене тӗрлӗ çимӗçсем сутма 13 лоточник площӗçе тухаççӗ.

Чеборг уйав кунӗсем ваӈӈи тӗрлӗ çимӗç таварӗсем — мандаринсем, виноградсем тата промышлӗннӑç таварӗсем нумай кӳрсе килет.

7 çул коӈухра

Хаӈ вӑл 64 çула çитнӗ. Çӳçӗсем кӑвакарса шурала пуçланӑ. Ӗçе тӑрӑшса тума йуратать. 1931 çулта Вӑрман Йенӗш йалӗнче (Шӑхасан р.) колхоз тӑваççӗ. Чухӑнсемпе вӑтам хресченсем колхоза кӗрсе, устав тӑрӑх, ӗçхатӗрӗсемпе туртӑм вӑйӗсене пӗрлештернӗ кунах Куçмин Çтепана коӈуха уйӑраççӗ. Унтанпа çичӗ çул тултарса саккӑрмӗш çул çине кӗтӗмӗр. Çичӗ çул хушшинче Куçмин коӈух колхоза 14 тыха ӳстерсе пачӗ. „Улайкӑ" йатлӑ кӗсре çулленех пӗрер тыха хӑмласа панӑ. Иртнӗ çул „Свобода" колхоз правлени Куçмин Çтепана лайӑх ӗçленӗшӗн 25 ӗçкунӗ хушса панӑ.

А. Оçипӑв.

Хисеп хӑми тӑваççӗ

Канаш — Шупашкар чукунçул строителствинчи паллӑ стаханӑвӗçсем мӗнле ӗçленине тата Октабӗр уйавне вӗсем мӗнле çитӗнӳсемпе кӗтсе илнине кӑтартас шутпа, чукунçул строителствин управленийӗпе постройком хисеп хӑми организацилеççӗ.

Вӑл хӑма çине строителствӑри чи лайӑх стаханӑвӗçсене, „Почетному железнодорожнику" тата „Ударнику сталинского призыва" йатлӑ значоксем илнисене кӗртеççӗ.

Хисеп хӑмине Шупашкарта, Чӑваш АССР Верховнӑй Сучӗн çурчӗ тӗлне лартаççӗ. Октабӗр уйӑхӗ вӗçнеле ӑна художествӑ йенчен илемлетсе çитереççӗ.

Ал. Смышӈайӗв.

Çамрӑк специалиссем

Кӗтеснерти „ПСК(б) Партин 15-мӗш сйесӗ" колхозри Вера Петровӑпа Феофан Изоçимӑв йулташсем Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строителствинче иртнӗ çултанпа ӗçлеççӗ. Петровӑ йулташ строителствӑна ПСÇЛКС Вӑрмар райкомӗ панӑ командировкӑпа килнӗ. Çулталӑк хушшинче иккӗшӗ те чылай малала кайрӗç. Малтанхи вӑхӑтра çӗр чавнӑ çӗрте ӗçленӗ Петровӑ йулташ кайарахпа кондуктӑрсен курсне вӗренме кайнӑ. Курсран вӗренсе тухсан ӑна аслӑ кондуктӑра илнӗ.

Иртнӗ çулта çӗр чавнӑ çӗрте ӗçленӗ Феофан Изоçимӑв та хаӈхи вӑхӑтра специалист моторист пулса ӗçлет. Ӗçре иккӗшӗ та паха примерсем кӑтартаççӗ.

В. Алендейӗв.

Тӗп библиотекӑра

Шупашкарти Горький йачӗпе тӑракан тӗп библиотекӑ комсомол 20 çул тултарнӑ йатпа комсомол çинчен ӳкернӗ фото-ӳкерчӗксен выставкине тата комсомол çинчен çырнӑ кӗнекесен витринине йӗркеленӗ.

Çӗнӗ магазин

Чебторг Октабӗр уйавӗ тӗлне спирт савӑчӗпе кирпӗч савӑтӗнче ӗçлекен рабочисем ваӈӈи, Чувашскайа урамӗнче тата ун çывӑхӗнчи урамсенче пурнакан ӗççыннисем ваӈӈи спирт савӑчӗ çумӗнче çӗнӗ магазин уçать. Вӑл магазина уçма пӗтӗмпех хатӗрлесе çитернӗ.

Колхозсенчи пулӑшу кассисем

Чӑваш республикӗнче колхозсенчи пӗр-пӗрне пулӑшакан кассӑсем мӗн пурӗ 1.545 шутланаççӗ.

1938 çулӑн пӗррремӗш çурçулӗпче вӗсем хӑйсен укçи-тенкипе 31 колхознике курортсемпе санаторисене йарса сыватнӑ. Тӑлӑх ачасене 19.932 тенкӗ, красноармейӗçсен çемйисене 19.186 тенкӗ, ӗçлеме пултарайман ватӑ колхозниксемпе инвалидсене 22.146 тенкӗ парса пулӑшнӑ. Ача амӑшӗсене, çуралнӑ ачасене пӑхмали йапаласем туйанма 3.775 тенкӗ панӑ.

Драмкружок

Сӗнтӗрвӑрринчи çӗрйӗркелӳп мелиораци техникумӗнчи драмкружок, К. Орудин студент йертсе пынипе, Йашчеринӑ колхозне кайса „Аниса" пйесӑна выӈаса пачӗ. Курма пынисем постановкӑна ырларӗç.

Н. Павлӑв

ТӲРЛЕТНИ

Октаберӗн 21-мӗшӗнче тухнӑ „Чӑваш Коммунӗ" хаçатӑн умстатйинче иккӗмӗш колонкӑра „Йӗпреç районӗ пайанхи кун тӗлне те 58 процент çеç коллективизациленнӗ" тенине 62 процент тесе вуламала.

Çавӑнтах „кунта райӗçтӑвком председателӗн ӗçӗсене туса пыраканӗ Тимофейӗв йулташ хӑй те йединоличник", тени тӗрӗс мар. Тимофейӗв йулташ колхозра тӑрать, анчах ашшӗ-амӑшӗсем колхоза кӗмен.

Ответлӑ редактӑр Н. М. ÇЕМЕНӐВ.

Йӑла ыйтӑвӗсем

Пӗр учреждени тата хватер ыйтӑвӗ

Шупашкар хулинчи ӗççыннисем, коммуналлӑ хватерте пурӑнакансем, çуртсене йусас ыйтупа хула советне кайаççӗ. Хула советӗнче вӗсем пурӑнмали çуртсен управленине (унӑн начаӈникӗ Иванов йулташ) пыраççӗ.

— Кӑмака начар, пушар инспекцийӗ вут хутма чарчӗ, хӗл çывхарать, кӑмака йусасчӗ,—тесе ыйтать пӗри çапла Ивановран.

Тепри пӳрт çийӗ çӗрсе кайни, кӗркуннехи çӑмӑр пурӑнмали пӳлӗмсене анса тулни çинчен калать. Иванов йулташ çак сӑмахсене кӑмӑллӑн итлет. „Блок-нот" çине çырса хурать те:

— Ку ыйтусем тӑрӑх йалтах хула совечӗн ремонт кантурне, Гордин йулташ патне каймала, тесе çул кӑтартса йарать.

Гордин йулташ начаӈник пулса тӑракан ремонт кантурӗ хула совечӗн айалти хутӗнче. Унта хватерсене йусаттарас тесе пынӑ çынсем темӗн чухлӗ. Гординпа ӗçпе пынӑ çынсем хушшинче йаланах çакнашкал калаçусем пулса иртеççӗ:

Ӗçпе пынӑ çын:—Хватерте виçӗ çемйе пурӑнатпӑр. Çурт çийӗ çӗрсе кайнӑ. Шыв анать. Епӗр пурӑнакан çурта тахçанах йусама палӑртнӑ. Хӑçан йусатӑр?

Гордин:—Вӑхӑт çитсен хамӑрах йусама тытӑнатпӑр.

Ӗçпе пынӑ çын:—Хӗл çывхарса çитрӗ. Сирӗн, мӗшӗлтисен, хӑçан вӑхӑт çитет?

Гордин:—Кунта шавламали çурт мар. Ку ремонт кантурӗ. Лайӑх çуртра пурӑнас килет пулсан мӗн кирлине ху ту.

Кун хыççӑн, пӗр-ик минут хайартарах сӑмахсемпе калаçнӑ хыççӑн, ӗçпе пынӑ çын хӑйӗн ыйтуне татмасӑрах тухса кайать.

Хула совечӗн ремонт кантурне пыракансем пурте пекех пӑшӑрханса тухса кайаççӗ. Кунта ӗçпе пынӑ çын ыйтуне тӗплӗн пӑхса тухса татса пама мар, çын çине йӗрӗнсе пӑхаççӗ. Ӗçпе пынӑ çын хӑйӗн ыйтуне пурнӑçа кӗртме çине тӑрса ыйтсан, унпа калаçма та пӑрахаççӗ.

Шупашкар хулинче çийӗсем çӗрсе кайнӑ, хапхисем йӑтӑнса аннӑ, тайӑлса кайнӑ çуртсем сахал мар. Вӗсенчен нумайӗшӗ çав ремонт кантурӗн айӑпӗпе пулнӑскерсем. Ку ӗнтӗ пурӑнмали çуртйӗр фондне ӳстерсе пыни мар, ӑна салатса пӗтерни пулать. Совет Сойузӗнчи ӗççыннисем йӗркелӗ хватерте пурӑнасшӑн, вӗсен ыйтуне пурнӑçа кӗртес пулать.

Р. Шашков.

★ ★

Иккӗмӗш колхоз театрӗ Вӑрмарта

Октаберӗн 11-мӗшӗнче Патӑрйелӗнчи колхоз театрӗ Вӑрмар поçолӑкӗнче концерт лартса пачӗ. Концерта пӑхнӑ хыççӑн çакна каламала: театр хӑйӗн ӳсӗм çулӗ çинче чылай çитӗнӳсем туни курӑнать. Театр тӑрӑшса ӗçлесен, аван постановкӑсем пама пултарать. Вӑл „Çӳпçипе хупӑлчи" комедине пысӑк пултарулӑхпа выӈаса панинчен аван курӑнчӗ. Ку постановкӑра уйрӑмӑнах Кузнецовӑпа Бикуловӑ актриссӑсем лайӑх выӈанине палӑртмала.

Çавӑн пекех театр çумӗнчи шавлӑ окрестр выӈаса панӑ йурӑсемпе кӗвӗсем, уйрӑм тухса йурланисем тата чӑваш поечӗсен çӗнӗ сӑввисене вуласа пани куракансене килӗшрӗç.

„Сцена жен" йатлӑ комеди сыпӑкӗ куракансене килӗшмерӗ, содержанисӗр йапала. Театрӑн пурнӑçа анлӑн кӑтартса паракан пйесӑсене лартса пама тӑрӑшмала.

А. Пермек.

Спорт обшчӗствисене, физкуӈтурӑ коллективӗсене, райӗçтӑвкомсен физкуӈтурӑ инструктӑрӗсене тата ытти организацисене

ПӖЛСЕ ТӐМА

Чаваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ çумӗнчи физкуӈтурӑпа спорт ӗçесен Комитечӗ Карл Либкнехт урамӗнчи 14-мӗш номӗрлӗ çурта куçнӑ.

Пӗлтерни

Пайан, октаберӗн 22-мӗшӗнче, каçхине 6 сехетре хула совечӗн çуртӗнче хулари хӗрарӑмсен—килхуçи хӗрарӑмӗсемпе активӑн пӗрлехи пухӑвӗ пулать.

КУН ЙӖРКИ:

1. Октабӗр уйавне хатӗрленесси çинчен —докладчик Калинкинӑ йулташ;

2. Хулари санитари ӗçӗ мӗнле тӑни çинчен—докладчик Озерӑвӑ йулташ.

Хула совечӗ.

ГЛАВГАСТРОНОМӐН

„БАКАЛЕЯ"

магазинӗ, Октабӗр уйавӗ тӗлне, октаберӗн 23-мӗшӗнчен пуçласа малтанлӑха çакӑн пек

АПАТ-ÇИМӖÇ ЗАКАЗӖСЕНЕ ЙЫШӐНАТЬ:

кондитӗрски çимӗçсем, ерехсем, кӑлбаси çимӗçӗсем, тортӑсем, пирожнӑйсем.

Заказпа хатӗрленӗ çимӗçсене киле леççе параççӗ

Зайавкӑсене магазинра отдел заведуйушчийӗ патӗнче тата 1—77 номӗрлӗ телефон тӑрӑх та йышӑнаççӗ.

ДИРЕКЦИ.

„ЧӐВАШ КОММУНӖ" ÇЫРӐНСА ИЛМЕЛИ ХАКСЕМ: ПӖР УЙӐХА 2 т. 50 пус. 3 УЙӐХА 7 т. 50 п., 6 УЙӐХА 15 т., ÇУЛТАЛӐКА 30 тенкӗ. ПОДПИСКӐНА ÇЫХАНУ УЙРӐМӖСЕМ, ПИÇМОНОÇЕÇСЕМ ЙЫШӐНАÇÇӖ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 547 Гор. Чебоксары, типография № 1 Местпрома ЧАССР, заказ № 793 ф. 6. 55×84 п. л.